Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938
ИЙУН
23
КĔСНЕРНИКУН
142 (4955) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомăн хаçачĕ

Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67, Ред. заместителĕн 0—88, Редакци секретарĕн 4—40, Дежурнăйăн 6—23

Вăйлă тырпула пуçтарса кĕртме хатĕр тăрар

Пайан епĕр ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ тырпулсене пуçтарса кĕртесси çинчен йышăннă постановленине пичетлесе кăларатпăр. Çак постановлени районсенчи партипе совет организацисем аллинче колхоз уйхирĕсенче вăйлă çитĕнекен тырпула кĕске вăхăтра, пысăк пахалăхпа пуçтарса кĕртме пĕтĕм колхозниксемпе ĕçхресченсене мобилизацилемелли программă вырăнне пулса тăмала.

Республикĕн пур районĕсенчен те тырпулсем лайăх ӳсни çинчен пĕлтерессĕ. Вăл пире колхоз уйхирĕнче стахановла ĕçлени ахаљ иртменнине, тӳрĕ ĕçлекен колхозниксен ĕçкунĕ хакĕ тата пысăкрах пулассине кăтартса парать. Çакă вăл, тырпул тухăçĕ вăйлă пулни, колхозниксене çеç мар, пĕтĕм рабочи класа, пĕтĕм совет халăхне савăнтарать.

Анчах та вăйлă тырпул хăй тĕллĕн пырса кĕмест. Вăйлă тырпул илесси халь ĕнтĕ парти организацийĕсем, колхозсем тата машинăтрактăр станцисем тырпул калчисене пăхса ӳстерес ĕçе мĕнле организациленинчен, тырпулсене хăвăрт та тăкаксăр пуçтарса кĕртме мĕнле хатĕр тăнинчен килĕт.

Совет стройĕ ĕçхресченсене помещиксемпе кулак пусмăрĕнчен хăтарчĕ çеç те мар, йалхуçалăх ĕçĕсене механизацилесе колхозниксен ĕçне нумай çăмăллатрĕ. Иртнĕ çулта республикăра 100 комбайн ытларах ĕçленĕ пулсан, кăçал тырпулсене пуçтарса кĕртес ĕçе çĕнĕрен татах 130 комбайн хутшăнмала. Вĕсем пурте совет комбайнисем.

Комбайнсемпе тĕрĕс усă курса ĕçлесен, çавăн чухлĕ комбайнсемпе пит пысăк лаптăк пуçтарса кĕртме пулать. Чăваш, Тутар тата Мордва республикисем хушшинче тунă социалисăмлă ăмăрту догăврĕ тăрăх пирĕн комбайнерсем кашни комбайнпа 300-шер гектăр пуçтарса кĕртме пулчĕç. Анчах 300 гектăр вăл иртейми лаптăк мар. Тутар республикинчи комбайнерсем 400-шер гектар пуçтарса кĕртме обйазательствă илчĕç. Мордва республикинчи Кочуровски МТСтанцинчи комбайнер Платонăв иртнĕ çултах 767 гектар пуçтарса кĕртнĕ.

Тырпулсене пуçтарса кĕртес ĕçчи хĕрӳлĕ ĕç вăхачĕ. Пĕр вăхăтрах тыра та вырмала, государствă умĕнчи обйазательствăсене тултармала, кĕртырисене акмала, авăн çапмала, государствăна тыра леçмеле, техникăла культурсене пухмала т. ы. те. Тырпулсене кĕске срукра пуçтарса кĕртни, чи малтан, тăкаксăр пуçтарса кĕртнине пĕлтерет. Анчах вăл çеç мар. Кĕске срукра пуçтарса кĕртни тата йалхуçалăхĕнчи ытти ĕçсем вальџи вăй пушатса ытти ĕçсене те лайăх пахалăхпа туса иртерме май парать. Çавăнпа та тырпулсене пуçтарса кĕртес ĕçре комбайнсĕм, тыра вырмали машинăсем калама çук пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ.

Калас пулать, тĕрĕссипе халь нихăш район та тырпулсене пуçтарса кĕртес ĕçе çителĕклĕ хатĕрленнĕ тесе калама пултараймасть. Пуринчен ытларах комбайнсене тата тыра вырмали машинăсене йусас ĕç пит йапăх пырать. Чăваш Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн сведенийĕсем тăрăх, комбайнсене йусамали плана 66 процент çеç тултарнă. Çитменнине тата хăшпĕр районсем сийенлĕ практика—суйа сведенисем парса тăрас çул çине тăнă. Пăрачкаври машинă-трактăр станци ийунĕн 10-мĕшне 6 комбайн йусанă тесе пĕлтерет. Хайсем ийунĕн 13-мĕшне те пĕр комбайн çеç йусама ĕлкĕрнĕ. Кувакинăри МТС 4 комбайн вырăнне 7 йусанă тесе пĕлтерет. Ишлейре пайан кунччен пĕр комбайн та йусаман. Çавăн пекех Патăрйел, Канаш тата Трак районĕсенче те комбайнсене йусас ĕç пит йапăх пырать.

Комбайнсене йусас ĕçре çак кунсенчех татăклă улшăну тумала. МТС директăрĕсен йусамасăр йулнă комбайнсене тата молотилкăсене пурне те татăклă срукра—ийулĕн 5-мĕшне çитичен лайăх пахалăхпа йусаса çитермеле тăвас пулать.

Комбайнсем çултан çула нумайланса пыраççĕ. Çав вăхăтрах лаша вăйĕпе ĕçлемели машинăсем тырпулсене пуçтарса кĕртес ĕçре халлĕхе тĕп вырăнта тăнине манмала мар. Респубикăри колхозсенче жнейкăсемпе лобогрейкăсем пурĕ 3.541 машинă, утă çулмали 1142 машинă. Çав машинăсене пурне те тырпулсене пуçтарса кĕртес ĕçе тухиччен тĕплĕн йусаса хатĕрлесе лартма кирли пуринщĕн те паллă. Колхоз руководителĕсем вăйлă тырпул илессишĕн чăн-чăн большевикла тăрăшнине кăтартакан пайанхи висе вăл—тыра вырмали машинăсене халĕх кăтартулă йĕркелесе лартни пулать.

Тыра вырмали 3541 машинăран нумайĕшне кăçал йусамалă. Çав машинăсене йусас ĕç те районсенче пит йапăх пырать. Ийунĕн 10-мĕшне мĕн пурĕ те 723 машинă çеç йусанă. Жнейкăсемпе лобогрейкăсене йусас тĕлĕшпе уйрăмăнах Ишлей, Йĕпрес, Канаш, Тутаркас, Трак районĕсенчи колхозсем питĕ йапăх ĕçлеççĕ. Колхозсенчи машинăсене—жнейкăсемпе молотилкăсене йусас ĕçе те вăрăма йама пултараймастпăр. Ийулĕн 10-мĕшне кашни машинă ĕçе хатĕр пулса тăмала.

Халех, пĕр кун сиктермесĕр, комбайнсемпе, колхозсенчи машинăсемпе ĕçлекенсене хатĕрлесе вĕсем çумне хăйсем ĕçлемели машинăсене çирĕплетсе памала. Кашни комбайнер, кашни машиновед хăй çумне çирĕплетнĕ машинăна хăй йусатартăр, колхоз машинине йусанă çĕрте тимĕрçĕпе пĕрле машинăпа ĕçлеме палăртнă колхозник те ĕçлетĕр. Çапла йĕрке тусан çеç ответсăрлăх пĕтет, машинăсене йусас ĕç хăвăрт тата лайăх пахалăхпа иртме пултарать.

Тырпулсене пуçтарса кĕртес тата государствăна тыра тăратас ĕçре транспăрт хатĕрĕсем—урапасемпе автомашинăсем пит пысăк вырăнта тăраççĕ. Вĕсенчен чылайĕшĕ халь скатсем çук пирки тата хĕшпĕр пайĕсем ванчăк пирки гаражрах лараççĕ. Парти райкомĕсемпе райĕçтăвкомсен, МТС директăрĕсен колхозсенчи автомашинăсене вăхăтра йусас ĕç çине тимлĕн çавăрăнса пăхмала.

Кăçал кашни колхоз умĕнче тыра типĕтмели вырăнсем тăвас задачă тăрать. Чылай колхозсем витнĕ итемсемпе тыра типĕтмелисене хатĕрлес ĕçе халиччен тытăнмасăр тăраççĕ. Витнĕ итемсем çинче кивĕ улăм купиисем, арпасемпе çӳп-çапсем выртаççĕ. Улăмсене тата çӳп-çапсене халех тасатмала. Вăл çеç те мар, витнĕ итемсем çине извĕç шĕвекĕ сапса тухса йе улăм сапса çунтарса клешчсенчен тĕплĕн тасатмала. Çак ĕçсем те кашт та кĕттермеççĕ.

Тырпулсене пуçтарса кĕртессинче уйрăмăнах ĕçе тĕрĕс организацилени кирлĕ. Кашни бригада, кашни звено хăй ĕçлекен лаптăкшăн ответлă пултăр. Бригадăсенче тата звеносенче ăмăртса стахановла ĕçлесси тĕп вырăнта тăмала.

Тырпулсене пуçтарса кĕртме тухаччен вăхăт нумай йулмарĕ. Хатĕрленес тĕлĕшпе тумали ĕçсем нумай. Парти тата совет организацисем, çĕрĕç органĕсемпе МТС дирекцисем тата колхоз руководителĕсем ĕçе чăннипех большевикла тытăнсан туса çитермен ĕçсене кирлĕ вăхăта туса çитерме пултараççĕ.

РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕ ĕçхресченĕсен политикăлă тата производствăлă çĕкленӳне нихăçанхинчен те ытла вăйлатса йачĕ. Партипе совет организацисен çак çĕклевӳ пуçне тăрса пĕтĕм колхозниксемпе йединоличниксене Обкомпа Халăх Комиссарĕсен Совечĕн постановленине пурнăçа кĕртме хутшăнтармала, социалисăмла ăмăртăва тата ытларах вăйлатни тăрăх тырпулсене пуçтарса кĕртес ĕçе иртнĕ çулхинчен те лайăхрах организацилемеле тăвас пулать. Çапла ĕçлесе йертсе пырсан тырпулсене пуçтарса кĕртес ĕçпе государствăна тыра тăратас ĕçсене анăçулăн иртерме пулать.

Çĕнĕрен кăларнă почтă маркисем

ССРС Çыхăну Халăх Комиссариачĕ сойузлă республикăсен Верховнăй Совечĕсене суйланă тĕле почтă маркисен çĕнĕ çерине пичетлесе кăларнă. Çак çери вунпĕр маркăран тăрать. Вĕсенчен кашнин çинех вунпĕр сойузлă республикăсенчен пĕрин государствă гербне ӳкернĕ. Вăл маркăсем пурте 20 пус тăраççĕ, анчах кашнинех тĕрлĕрен сăрсемпе çапнă: хĕрлĕ, кăвак, симĕс, сарă, шупка, хĕрлĕкăвак т. ыт.

Мускаври почтă уйрăмĕсенче çĕнĕ маркăсене сутма пуçланă ĕнтĕ.

(ТАСС,)

Тырпул пуçтарса кĕртме хатĕрленессипе тырпулсене пăхса çитĕнтерессĕ çинчен

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулти ийунĕн 16-мĕшĕнче йышăннă постановлени

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн бюровĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çакна палăртаççĕ: чылай районсем çураки иртернĕ хыççăн лăпланса ларнă, тырпулсене пăхса çитĕнтерессипе пуçтарса кĕртме хатĕрлесси çине начартарах пăхма пуçланă. Чылай районсенчи партипе совет организацисем çакна анланса илмен: çуракине иртерни лайăх тырпулшăн кĕрешес ĕçĕн пуçламĕшĕ кăна. Вăйлă тырпул туса илесси парти организацисем, колхозсем, МТС-сем тырпулсене пăхса çитĕнтерес тата тырпулсене кĕске вăхăтра тăкаксăр пухса кĕртес ĕçсене большевикла организацилеме пĕлнинчен килет. Ĕçе тĕрĕслесе пăхни çакна кăтартрĕ: районсенче тырпулсене пуçтарса кĕртме хатĕрленес ĕç çителĕксĕр пырать. Уйрăмах МТС-сенче—трактăрсемпе молотилкăсене, колхозсенче—тырпул пуçтарса кĕртмели машинсене йусасси начар тăрать. Чылай районсем тăрăх машинăсене йусани çинчен кăтартакан сведенисем тĕрĕс мар. Çавăн пек, Пăрачкав районĕнче 6 комбайн йусанă тесе кăтартаççĕ, чăннипе пĕр комбайн анчах йусанă. Кувакинă МТС-сенче 7 комбайн вырăнне—4. Çитменнине тата йусанă, комбайнсем пирки акт та çырман. Комбайнсене йусасси Патăрйел, Канаш, Трак районĕсенче пуçĕпех çителĕксĕр пырать, молотилкăсене йусама та тытăнман темелĕ. Машинăсене йусас ĕç çакăн пек кайа йулса пыни тырпулсене пухса кĕртме вăхăтра тытăнассине чăрмантарма пултарать. Нумай колхозсем витнĕ итемсем, тыра типĕтмели вырăнсем тăвас, вĕсене çӳп-çапсенчен, тырпула сийен кӳрекен хурткăпшанкăсенчен, клешчсенчен тасатас ĕçе тивĕçлипе тытăнман.

ПСК(б)П Обкомĕ тата ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленес ĕç çавăн пек тăнине чăтма çук, тесе шутлаççĕ. Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, ПСК(б)П райкомĕсене, райĕçтăвкомсене, МТС директăрĕсене, колхоз правленисене тата пуçламĕш парторганизацисене пурне те тырпулсене пухса кĕртме вăхăтра хатĕрленмели ĕçсене тума хушаççĕ.

ПСК(б)П Обкомĕпе ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнаççĕ:

1. Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕпе МТС директăрĕсене комбайнсене, молотилкăсене, тырпулсене пухса кĕртмели ытти машинсене хăвăрт тата чи лайăх йусаса çитерме кирлĕ пур ĕçсене те халех тума хушас. МТС-сен комбайнсемпе ытти машинăсене ийулĕн 5-мĕшĕ тĕлне йусаса çитерессине хисепе илсе график тумала; колхозсен тырпулсене пухса кĕмели машинăсене (вырмали тата авăн çапмали машинăсене) ийулĕн 10-мĕшĕнчен кайа йулмасăр, утă çулмали машинăсене ийунĕн 25-мĕшĕнчен кайа йулмасăр йусаса çитермеле. Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕпе Обкомăн йалхуçалăх пайĕн кайа йулнă МТС-семпе районсене работниксене йамала.

2. Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕпе МТС директăрĕсене машиноведсен тата комбайнерсен кадрĕсене халех тупса çитерсе, вĕсен çумне машинăсене—йусама тата ĕçлеме—çирĕплетсе пама хушас. Çакăн пек йĕркĕ пулмала тăвас: комбайнсемпе сложнăй молотилкăсене йусанă чухне вĕсем çинче ĕçлес комбайнер йе машиновед сăнаса тăтăр, колхозсенче тырпулсене пухса кĕртмели машинăсене йусанă çĕре жнейкă çинче, косилка йе молотилкă çинче ĕçлеме çирĕплетнĕ машиноведсем хутшăнмала.

3. Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн райĕçтăвкомсен тата МТС директăрĕсен тырпулсене пухса кĕртмели машинăсене мĕн таран паха йусанине çирĕп тĕрĕслесе тăмала тăвас пулать, лайăх йусамасăр айăпа кĕнĕ çынсене хытă ответ тыттармала. Çакăн пек йĕрке тăвас: комбайнсене, тырпул пухса кĕмели ытти машинăсене йусасан, вĕсене МТС директăрĕ йе колхоз председателĕ, çав машинăсем çинче ĕçлеме çирĕплетме комбайнер, машиновед йе машинис пур чухне, акт тăрăх йышăнсан тин йусаса çитернĕ, тесе шутламала. Машинă-трактăр станцисенче тырпулсене пухса кĕмели йусанă машинăсене ĕçсем пуçланиччен 10 кун малтан машиноведсемпе комбайнерсене памала, пĕрлех маршрутсемпе ĕçлемели графиксене те памала.

4. Колхозсемпе МТС-сенчи тырпулсене пухса кĕмели машинăсемпе автомашинăсене йусама запаслă пайсем кӳрсе килесси çителĕксĕр тăнине палăртса, йалхуçалăх снабженин Чăваш кантурне тата трактăрдетальсен Шупашкарти агентствине МТС-семпе колхозсене кирлĕ запаслă пайсене çителĕклĕ тупса пама хушас. Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, Йалхуçалăх снабженийне тата Вырăнти промышлĕннăç Халăх Комиссариатне тырпулсене пухса кĕмели машинăсене йусамали çăмалрах детальсем туса хатĕрлессине хамăр республикăри савăтсенче организацилеме хушас.

Улатăрти вĕренӳ-транспăрт комбинат директăрне—Польаков йулташа—Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕпе Йалхуçалăх снабжени заказĕсене пурнăçа кĕртмеле тума хушас.

5. МТС директăрĕсене тата колхоз правленисене ийунĕн 25-мĕшĕнчен кайа йулмасăр комбайнсемпе пухса кĕмели участкăсем уйăрма хушас, участкăсем уйăрнă çĕре комбайнерсене хăйсене хутшăнтармала, вăл участкăсене тĕплĕн пăхса тăмала тата çумкурăксенчен тасатмала.

6. Кашни колхозăн витнĕ итемсем, зерносушилкăсем пулмала задачă лартас. Витнĕ итемсене, авăнсене тата зерносушилкăсене йусаса пĕтермели срук ийулĕн 1-мĕш, çĕнĕ строительствăсене тумали срук—ийулĕн 5-мĕш пулать.

7. Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, райçĕрĕç пай пуçлăхĕсене, МТС директăрĕсене, Хатĕрлевсен Халăх Комиссариачĕн уполномоченнăйĕсене тата заготзерно пунктисен управльайушчийĕсене колхозсенче тата хатĕрлев пункчĕсенче зернохранилищĕсене клешчсемпе ампарсенчи сийенлĕ хурт-кăпшанкăсенчен йалтах тасатса дезинфекци тума хушас, çак ĕçе ийулĕн 10-мĕшĕнчен туса пĕтермеле. Колхозсенче, МТС-сенче тата Заготзернора обйазательнă тумали ĕç вырăнне хурса мĕн пур тарасене, сортировкăсене тата тырпул пухса кĕмели машинăсене дезинфекци тумала, пĕçертсе тасатмала, кирлĕ пулсан—çĕнĕ тырпула клешчсемпе ытти сийенлĕ хурткăпшанкăсем йересрен сыхлас тесе, итемсене урăх çĕре куçармала тата извĕçлемеле.

Йалхуçалăх снабжени кантурне, колхозсемпе совхозсен ампарĕсене, зернохранилищĕсене тата овошчехранилищĕсене дезинфекцилеме химикатсем вăхăтра кӳрсе килме хушас.

8. Обкомпа Халăх Комиссарĕсен Совечĕ райкомсене, райĕçтăвкомсене тата МТС директăрĕсене тырпулсене пухса кĕртнĕ тĕле транспăрта (автомашинăсене тата ут транспăртне) вăхăтра тата пĕтĕмĕшпех хатĕрлесе çитĕрмеле тума; Коротков йулташа—колхозсемпе МТСтанцисен автомашинисем вальџи запаслă пайсем тата резинă кӳрсе килмеле тума хушаççĕ.

9. Обкомпа Халăх Комиссарĕсен Совечĕ суртлă тырăсемпе вăрлăхлăх акнă тырпулсене пухса кĕртме тĕплĕн хатĕрленме кирлине уйрăмăнах астутараççĕ. Суртлă тырăсене тата вăрлăхлăх тырăсене пухса кĕртессине обйазательнă суртсем тата категорисем тăрăх тумала, кӳ ĕçре хуçасăрлăх тата суртлă тырăсене хутшăнтарса йани пулмала мар. Чылай колхозсенче кĕлте кӳртес, авăн çапас тата тырăсене пуçтарса хурас ĕçе бригадăсем хушшинче пĕр пĕринпе хутăштарсе йарса тунине сийенлĕ ĕç тесе сивлес,—кун пек туни малта пыракан бригадĕсемпе стахановла звеносен лайăх ĕçне хуплаcа хурать, çапла вара малта пыракансемпе стахановецсен ролне пĕчĕклетет.

10. МТСтанцисемпе колхозсенче тырпул пухса кĕмели машинăсем çинче ĕçлекен кадрсене хатĕрлес ĕç йапăх пынине палăртса, МТС директăрĕсемпе райçĕрĕçпай пуçлăхĕсене кадăрсем хатĕрлес ĕçе халех лайăхлатма тата МТСтанцисенче те, колхозсенче те тырпул пухса кĕрес ĕçсем вальџи çителĕклĕ таран кадрсем хатĕрлеме хушас. Çĕрĕç Халăх Комиссариатне Канашри йалхуçалăх механизаци шкулĕнчен комбайнерсене кирлĕ таран, вăхăтра вĕрентсе кăлармала тума хушас.

11. ПСК(б)П Обкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ тырпулсене пăхса ӳстерес тата çĕртме пуссисене таса тытас ĕçе чылай районсенче йапăх организациленĕ тесе палăртаççĕ. Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, ПСК(б)П райкомĕсене, райĕçтăвкомсене тата колхоз правленийĕсене тырпулсене пăхса ӳстерес тата çĕртме пуссисене таса тытас тĕлĕшпе çак ĕçсене тума хушас:

а) мĕн пур тырăсене çумкурăксенчен тĕппипех тасатмала. Вăрлăхлăх хăварнă участкăсем çинче тырăсене çумкурăксенчен кăна мар, тата ытти культурăсемпе хутшăнса кайнинчен те тасатмала;

б) çу каçиччен тимăрçимĕçсене, çĕрулмине, махоркăна тата пахчаçимĕçсене темиçе хутчен те йарансен хушшисене сухаласа тухмала. Çак ĕçе çумкурăксенчен тасатассипе пĕр вăхăтрах тумала. Йĕтĕне çумкурăкĕсеннен, шăпканран тасатасси çине уйрăмах хытă пăхмала. Йĕтĕн, пахча-çимĕç тата махоркă акнă колхозсенче пуринче те калчасене минераллă тата органически имçамсемпе апат памала;

в) çĕртме уйĕсене вăхăтра культиваци тумала, вăхăтра сӳремеле, çу каçипех таса тытмала;

г) минераллă имçамсемпе тислĕксене пĕтĕмпех çĕртме пуссине турттарса тухмала.

12. Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариатне, райĕçтăвкомсене тата колхоз правленисене уйри тырпулсене пухса кĕртес ĕç пуçланачченпур колхозсенче те ача йаçлисем организацилеме, вĕсене вальџи вăхăтра йурăхлă çуртсем, унта тыткалама кирлĕ хатĕрсем тата апат-çимĕçсем уйăрса пама хушас. Райкомсемпе райĕçтăвкомсене колхозсенчи ача йаçлисемпе плошчадкисен ĕçĕсене тĕрĕслесе тăма тата вĕсене куллен йертсе пыма хушас.

13. ПСК(б)П райкомĕсемпе райĕçтăвкомсене МТС-пе колхозсем уйри тырпула пухса кĕртме хатĕррине чи сывăх кунсенчех тĕрĕслесе тухма, палăртнă çитменлĕхсене МТС тата колхоз работникĕсем хушшинче сӳтсе-йавма тата çав çитменлĕхсене сийĕнчех пĕтерсе пыма хушас.

14. ПСК(б)П Обкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ тырпула пухса кĕрес ĕçĕн анăçлăхĕ колхозсенче, бригадăсенче, звеносенче ĕçе тĕрĕс йĕркеленинчен тата тырпула пухса кĕртес ĕçре стахановла меслете анлăн сарнинчен килет, тесе шутлаççĕ. Обкомпа Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, райçĕрĕç пайĕсемпе МТС сене тырпула пухса кĕмели ĕçсен планĕсене пур колхозсенче, бригадăсенче, звеносенче вăхăтра сӳтсе йавса тăвассине пурнăçа кĕртме хушаççĕ.

ПСК(б)П Обкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ ПСК(б)П райкомĕсемпе райĕçтăвкомсене çакна кăтартса параççĕ: тырпулсене пухса кĕртес ĕçсене анăçлăн хатĕрленсе иртерес, тата колхозниксемпе йединоличниксем государствăна тыра тăратас обйазательствăсене тултарас тĕлĕшпе тăракан задачăсене пурнăçа кĕртесси. парти, совет, комсомол, профсойуз организацисене йалта партилĕ-массăлă тата политикăлă ĕçсене аван сарса йама хушать.

ПСК(б)П Обкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ ПСК(б)П райкомсемпе райĕçтăвкомсене çаксене тума хушаççĕ:

Уйрăм колхозниксен, звеносен тата бригадăсен лайăх ĕç тĕслĕхĕсене кăтартса, хавхалантарса пырса, тырпула пухса кĕме хатĕрленес ĕçре те, çавăн пекех тырпула пухса кĕнĕ вăхăтра та стахановла йухăма тата социалисăмлă ăмăртăва анлăн сармала, трактăриссен тата колхозниксен пур бригадисенче те культурлă-массăлă тата политикăлă ĕçе йĕркелемеле (уйра культурăлă стансем тăвасси, çтена хаçачĕсем кăларасси, хаçатжурналсем вуласси тата ытти культурăлă-политикăлă ĕçсем те), МТС рабочийĕсемпе йалхуçалăх специалисĕсене, пур колхозниксемпе йединоличниксене сталинла пысăк тухăçлă тырпула пĕр тăкаксăр вăхăтра пухса кĕртес, социалисăмлă çĕрĕçейĕче çĕнĕ çĕнтерӳсем тăвас ĕçе мобилизацилемеле.

ПСК(б)П Обком çекретарĕ
Г. ИВАНОВ.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ
Л. СПАСĂВ.

М. И. Калинин йулташ Радишчĕв йачĕпе тăракан тир-сăран савăтĕнчи рабочисем патĕнче

ЛЕНИНГРАД, ийунĕн 21-мĕш. (ТАСС). Радишчĕв йачĕпе тăракан тир-сăран савăтĕнчи рабочисем, инженерсем, техниксемпе служăшчисем РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама палăртнă хайсĕн кандидачĕпе Михаил Иванăвич Калининпа тĕл пулнă. Ĕç пĕтнĕ хыççăн хура тир тăвакан цехри пысăк плошчадкă пĕтĕмпех халăхпа тулса ларнă. Кунта 1.500 çын пухăннă. Ку савăтра ĕçлекеннисемсĕр пуçне унта çывăхри участкăсенчи суйлавçăсем те пынă.

Пухура Калинин йулташ сăмах калакă, пухури çынсем ăна тăвăллăн алă çупса кĕтсе илнĕ. Михаил Иванăвич пирĕн çĕршыври рабочи класăн культурăлă тата политикăлă ӳсĕмĕ çинчен калакă. Унăн калама çук чаплă сăмахне пысăк тимлĕхпе те пысăк интереспе итленĕ.

Пуху пурте пĕршухăшлăн пулса резольуци йышăннă, унта Свердловски суйлав округĕнчи ĕçсыннисене пурне те Сталин йулташăн шанчăклă соратникĕшĕн—Михаил Иванăвич Калининшăн сасăлама чĕнсе калакă.

Çĕнĕ тырпула йышăнма хатĕрленмеле

Сойузра тырпулсене пуçтарса кĕрес хĕрӳлĕ кунсем пуçланчĕç. Ватам Азири республикăсенче, Орджоникидзе тата Краснодар крайĕнче кĕрхи урпа, Сталинград облăçĕнче—ыраш вырма тухнă. Кантăр йенчи хăшпĕр районсенче кĕрхи тулă та пулса çитнĕ. Заготзерно склачĕсене кăçалхи тырпултан пиншер пăт таса тĕштыра тийесе пынă та ĕнтĕ. Часах тырпула массăлăн тăратас ĕç пуçланать. Тĕштырсене йышăнса сыхласа усрас ĕçе кăтартулăн организацилес, çак ĕçри сăтăрлăхăн йулашкисене пĕтерес тĕлĕшпе Совет Сойузĕнчи хатĕрлев базисен работникĕсем умне калама çук пысăк задачă лартнă. Уйрăмах тĕштырсене купасенче сыхласа усрассине пĕтерес пулать, купасенче усрасан тырпул тăккаланса пăсăлса пĕтет.

Кăçалхи çул складсемпе елеватăрсем пит нумай тăваççĕ. 1.757,7 пин тоннă тĕштыра вырнаçмалăх 941 склад тата 257 пин тоннă вырнаçмалăх 46 елеватăр çĕнĕрен туса пĕтереççĕ. Кунсăр пуçне 116 пин тоннă вырнаçмалăх 21 елеватăра аслатаççĕ.

Çĕнĕ елеватăрсемпе складсенчен чылайĕшне тырпулсене пуçтарса кĕртме пуçланă тĕле хатĕрлесе çитермеле. Çапла пулсан та, вĕсен строительстви вăрахăн пырать-ха, уйрăм облăçсенче пачах çителĕксĕр.

Ийулĕн 1-мĕш тĕлне Заготзернон 699,5 пин тоннă тĕштыра вырнаçтармалăх складсем туса хатĕрлемеле пулнă, ийунĕн 10-мĕшне 82,5 пин тоннăлăх 44 склад çеç тунă-ха.

Хатĕрлев организацисенче ĕçлекен работниксем çĕнĕ тырпула йышăнмали техникăлă базăна правительствă çирĕплĕтсе панă срукра хатĕрлесе çитерме тивĕç.

(ТАСС).

Суйлав саккуне пăснашăн—суда панă

ВОРОШИЛĂВСК (Ворошилăвград облăçĕ), ийунĕн 21-мĕш. (ТАСС). „Ворошиловуголь" трестчĕн 10-мĕш номĕрлĕ шахтăн поçолăк совет председателĕ Сивый тата унăн çекретарĕ Ржевский суйлав саккунне пысăккăн пăснă. Суйлавçăсен спискисене тунă чухне вĕсем 576 çынна списăка кĕртмесĕр сиктерсе хăварнă. Ĕçсыннисен çигналĕсем çине çак мĕскĕн руководителĕсем çавăрăнса та пăхман. Списăксене тӳрлетмесĕрех хăварнă.

Ийунĕн 19-мĕшĕнче 10-мĕш номĕрлĕ шахтăра Ворошилăвскри халăх сучĕн выйăна туса çӳрекен çеççийĕ суйлаçсен правине пысăккăн пăснă пирки Сивыйпа Ржевский ĕçĕсене кăтартулă йĕркепе пăхса тухнă.

Сивыйа ултă уйăх хушши условнăй йĕркепе ирĕксĕр ĕçлеттермеле, Ржевскине — пĕр çул çура хупса усрамала пригăвăр йышăнна.

Июнĕн 26-мĕшĕ—РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлав кунĕ

Хамăр сасăсене тăван çĕршывăн чи лайăх ывăл-хĕрĕсемшĕн парар!

Çамрăксен митингĕ

Июнĕн 21-мĕшĕнче, каçхине çакăр сехет тĕлне Шупашкар хулин Хĕрлĕ плошчĕчĕ халăхпа тулчĕ. Кунта çамрăк суйлавçăсем—хулари предприятисемпе учреждениесенче, ертелсенче ĕçлекен рабочисемпе, работницăсем, студентсем, çамрăк инженерсем, техниксем, çамрăк хĕрарăмсен республикăри II мĕш сиесĕн делегачĕсем пулчĕç. Весем РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлана кун коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕн кандидачĕсемшĕн сасăлама хатĕр пулнине кăтартма пухăннă.

Митинга кĕске сăмах каласа ПСÇЛКС хула комитет çекретарĕ Тараскина йулташ уçрĕ.

Митингра тухса калакансем: ПСÇЛКС Чăваш Обкомĕн çекретарĕ Арзамасцĕв, тир-сăран савăтĕнчи стахановкă Скачковă, çамрăк хĕрарăмсен II-мĕш сиесĕн делегачĕ—ССРС Верховнăй Совет депутачĕ Моисейевă тата ытти йулташсем Шупашкар хулинчи çамрăк суйлавçăсене суйлав кунĕнче Сталин соратникĕшĕн Молăтăв йулташшăн, коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕн кандидачĕсемшĕн Ахазăв, Харитонăв, Калинкина йулташсемшĕн сасăлама чĕнеççĕ.

— Пирĕн совет çĕршывĕнче,—тет Скачковă йулташ,—çамрăклăх пысăк та хаклă телейлĕхре. Епĕр совет çамрăкĕсем, телейлĕ та савăнăçлă пурăнатпăр. Пирĕн вĕренме те, ĕçлеме те, канма та правасем пур, пирĕншĕн телейлĕ пурнăç çулĕ уçă. Çак ырлăха пире Ленин—Сталин партийĕ пачĕ. Çавăнпа епĕр Ленин—Сталин партийĕшĕн сасăлатпăр!

Митинга пухăннă çамрăк суйлавçăсем Чăваш АССР Верховнăй Совет депутатне суйлама тăратнă кандидат Варфоломей Тихăнăвич Харитонăв тухса калавне пысăк кăмăлпа саламласа йышăнчĕç.

Митингра тухса каланă йулташсем ĕçхалăхĕн çулпуçĕ Сталин йулташăн тата унăн çывăх соратникĕсен Молăтăв, Йежов, Кагановăч, Микойан, Калинин т. ыт. й сем йачĕсене асăннине çамрăк суйлавçăсем „урра" кăшкăрса, тăвăллăн алă çупса саламлаççĕ.

Митинг хыççăн Крупскайа тата Чăваш автономи 15 çул тултарнă йачĕпе тăракан сатсенче массовкă пулчĕ.

Телейлĕ пурнăçшăн сасăлатăп

Кăшни çĕнĕ кун пире аслă уйав патне—РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлас кун патне çывхартать. Епĕ лайăх пĕлсе тăратăп: кашни ĕççынни хаљхи вăхăтра, манашкалах, хăйĕн телейĕпе, тулли пурнăçĕпе, прависемпе савăнать. Тÿррипех калатăп: епĕ ĕлĕк çакнашкал савăнăçлă куна курасси çинчен шутламан, шутлама та пултарайман. Епĕ хамăн 76 çулхи пурнăçра нихçан та хаљхи пек савăнăçлăн, уççăн сывламан.

Мĕнле пурăннă-ха, мĕн курнă-ха епĕр ĕлĕк? Патша саманинче епĕр пĕрмайах çитмен пурнăçпа пурăннă. Пирĕн ачасем тĕттĕмлĕхре ÿснĕ. Ватă çынсем ытлашши çынсем шутланнă, çын шутĕнче те пулман. Нумай нуша курнă.

Халĕ пăхăр-ха: государствă ачасемшĕн тăрăшать. Вĕсене вĕрентет, воспитани парать. Халĕ ачасен ыранхи кунĕшăн иккĕленмели çук. Вĕсемшĕн пур çĕрте те çул уçă. Çавăнпа пĕрлех Совет влаçĕ пире те—ватă çынсене манса хăвармасть. Çавăнпа епĕ халĕ савăнатăп.

Пурăнма лайăх пирĕн çĕршывра. Анчах та лайăх пурнăçпа пурăнатпăр тесе ĕлĕкхи йăвăр пурнăç çинчен манма йурамасть. Чăн та, йăвăр пурнăç тахçанах кайа тăрса йулчĕ. Тăшмансем çав ĕлĕкхи пурнăçа кайала таврса пире татах чуралăха кĕртесшĕн. Вĕсен ĕçĕ тухмĕ. Епĕр йалан сыхă пулатпăр, тăшмансене пĕр хĕрхенÿсĕр çĕмĕрсе тăкма йаланах хатĕр!

Пирĕн чи çывăх тус—аслă Сталин йулташ йертсе пынипе пирĕн çĕршыв çирĕпленсе, тĕреклĕнсе пырать. Пысăк савăнăçлă кăмăлпа кĕтетĕп епĕ суйлав кунне. Суйлав кунĕнче епĕ, пĕтĕм РСФСР гражданĕсемпе пĕрле, суйлав урнисем патне пырса хамăн сасса телейлĕ çĕршывăн чаплă ывăлхĕрĕсемшĕн паратăп. Епĕ Çĕмĕрле суйлав округĕнчен РСФСР Верховнăй Совет депутатне суйлама тăратнă кандидатшăн Малинин Алексей йулташшăн, ЧАССР Верховнăй Совет депутатне суйлама тăратнă Каçйанăвă Верă йулташшăн сасăлатăп. Вĕсемшĕн—коммунистсемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн сасăлани—телейлĕ пурнăçшăн сасăлани пулать, тесе шутлатăп.

Суйлавçă: Çемен Филатăвич Иванов.

Ывăл-хĕрсемшĕн савăнатăп

ÇĔРПУ. (Хамăр корр.). 109 çулхи колхозник Çемен Борисăв сирĕн корреспондента çапла каласа пачĕ:

— Епĕ Чăрăш Туçа йалĕнчи (Çĕрпÿ р.) ПСК(б)П Чăваш Обкомĕ йачĕпе тăракан колхоз колхозникĕ. Епĕ пит ватă ĕнтĕ, кăçал 109 çула çитрĕм. Халĕ манăн ывăлсемпе хĕрсем (пур сыпăксене шутласан) 119 çын. Манăн ывăлсем, ывăлсен ывăлĕсем, хĕрĕсем нумайĕшĕ халĕ аслă шкулсенче вĕренеççĕ, нумайĕшĕ аслă шкулсенче вĕрентеççĕ, ответлă ĕçсенче ĕçлеççĕ. Акă манăн ывăлсем: Лаврентий 29 çул, Йемельйан 40 çул учителре ĕçлеççĕ, Маркел Хĕрлĕ Çартă пурăнать. Борис—инженер, Неçтĕр—доктăр, Анфисă—педагогикă институтĕнчен вĕренсе тухнă, Йули—вăтам шкулта учитĕл. Нинăпа Марийе пуçламĕш шкулта вĕрентеççĕ. Константин—аслă бухгалтĕр, Йеленă—çĕвĕ çĕлекен машинăсем тăвакан хапрăкра техноруk, Григорипе Васили—слесăр, Александр—автогужтрестра плановик, Клавди—маљари станцинче лаборантка, Йегор—самољотпа вĕçме вĕренекенсен шкулĕнче вĕренет, Петр—Хĕрлĕ Çартă рйадовой красноармейец; Анастаçи—каççир. Ытти ывăлсем, ывăлсен хĕрĕсемпе ачисем пурте тĕрлĕрен ĕçре ĕçлеççĕ.

Ĕлĕкхи самана пулнă пулсан епĕр çакăн пек лайăх пурнăça курас çукчĕ. Октăбĕр револуци хыççăн пирĕн валљи çул уçăлчĕ. Халĕ епĕ ватă пулсан та ĕçлемесĕр ларас килмест. Мана ывăлсемпе хĕрсем пулăшаççĕ, ан ĕçле, хамăр тăрантаратпăр, теççĕ. Ман чун çамрăксенни пекех, йури, уçăлса çÿрес тесе, колхоз уйне кантăр астума кайатăп. Епĕ колхоз уйне каймасăр килте тÿссе ларайрас çук.

Акă тата сире епĕ çакна калам. Ĕлĕк йалта старăстăсем суйланă, ăна чухăнсем пĕлмесĕрех йулнă.

Пайан епĕ питĕ хĕпĕртерĕм. Пайан мана хамăрăн Шĕнер суйлав округĕнчен Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă кандидат Тимофей Васильевич Васильев йулташ хăй патне чĕнсе илсе калаçрĕ. Ĕлĕкхи суйлавсенче епĕр кун пек савăнăç курман. Халиччен автомашинă çине ларса курманччĕ, пайан хамăрăн кандидат пирĕн йала килнĕ йатпа машинă çине ларса куртăм.

Епĕ Тимофей Васильевич Васильев йулташ Чăваш Тĕпĕçтăвком çекретарĕ пулса ĕçленине аван пĕлетĕп. Вăл халăхшăн тăрăшать, тĕрĕс ĕçлет. Вăл пире телейлĕ пурнăç туса паракан Ленин—Сталин парти кăтартнă пек ĕçлет. Вăл халăхсемшĕн тăрăшакан, епĕр шаннине пурнăçлама пултаракан çын.

Мана июнĕн 26-мĕшĕнче суйлав кунĕ пулни çинчен каласа кăтартрĕç. Епĕ çак кун ирпе ирех суйлав участкине кайса Тимофей Васильевич Васильев йулташшăн сасăлатăп. Туçи суйлав округĕнчи суйлавçăсене пурне те Васильевшăн сасăлама чĕнетĕп. Епĕ суйлав бÿллетенне хамах тултарма пултаратăп: хут пĕлетĕп.

В. Васильев.

Çамрăк суйлавçăсен пысăк пухăвĕ

ТĂВАЙ. (Телефонпа, хамăр корр.). Комсомол райкомĕ пуçарнипе районри çамрăксен суйлав умĕнхи пысăк пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху Сакăтпуç вăрман уçланкинче пулчĕ. Çамрăксем пухăва праçник чухнехи пек капăр тумланса пынă. Пурĕ 2 пин çынна йахăн пулчĕç.

Пухура Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлама тăратнă кандидатсем Родионăвăпа Измайлăв йулташсем çамрăксене хăйсен пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен каласа пачĕç.

Пуху хыççăн йурă, вăйă-ташă пулчĕ.

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ сойузлă республикăсен Верховнăй Совечĕсене хăйĕн чи лайăх представителĕсене, коммунисăм ĕçĕшĕн, Ленин—Сталин ĕçĕшĕн, пĕтĕм чĕререн тăракансене суйласа йарать.

(ИЗОГИЗ кăларнă плакат, Сойузфото репродукцийĕ).

Н. И. Шелепи

Хĕрарăмсене

Сталинла йĕркепе—
Хĕрарăмсен
Арçынсемпе пĕр пек
Прависем;
Советсене—паттăр
Арăмсемпе
Маттур
Хĕрсене те
Суйлаççĕ.

Колхозлă кун-çуллĕ
Çĕнĕ тĕнчен
Хĕвел пек хĕрулĕ
Ĕçĕнче
Пултарулă вутхĕм
Хĕрарăмсем
Çуралчĕç çĕршерĕн,
Пиншерĕн.

Ун пек хĕрарăмсем—
Ĕç паттăрĕсем—
Чăваш çĕршывĕн те,
Пурĕн те
Хĕрÿ кĕрешеççĕ—
Куљтурăлă çутă
Пурнăçшăн,
Халăхшăн.

Çавăнпа та епĕр,
Хĕпĕртесе,
Чăваш халăх паттăр
Хĕрсене
Чĕререн йуратса
Савăлатпăр,
Чаплă вырăнсене
Суйлатпăр.

Зойă Ананйевнă,
Калинкинă,
Меценатăвăна
Хаљ епĕр
Суйлав кунĕ çитнĕ
Йатпала пĕр
Йурă çеми çине
Илетпĕр.

Йеппе вĕсем Сталин
Тивлетĕнче,
Ĕç халăхĕн чаплă
Ĕçĕнче,
Хайуллăн ĕçлеççĕ
Хавхаланса,
Аслă тытăмсенче
Пуç пулса.

Акă мĕншĕн халĕ
Вăл йатсене,
Орденлă Республик
Хĕрĕсене,
Йурăсем шăратса
Пахалатпăр,
Верховнăй совета
Суйлатпăр.

Совет хĕрарăмсем—
Çапла вĕсем,
Арçынпа тан тăрса,
Ăмăртса,
Ирĕклĕхе сыхлас
Чаплă ĕçе
Хастарлă та хавас
Ĕçлеççĕ.

Социалисăмла
Республĕкри—
Хаваслă та чаплă
Çĕршыври—
Мухтавлă ĕмĕрĕн
Хĕрарăмсем,
Сыва пулччăр пирĕн
Паттăрсем!

Шупашкар.

Ленин—Сталин партийĕ панă телей

Тăвай районĕнчи, Кĕрше йалĕнчи 58 çулхи колхозник Иван Дмитрийĕвич Баранăв йулташ каласа пани

— Пирĕн „Свободный труд" колхоз кирĕсем епĕ çамрăк чухне Алхазăв улпут çĕрĕччĕ. Епĕр унта хамăрăн шăм-шакка сахал мар авнă. Пурна-киле Алхазăв улпут хăйĕн çĕрне пире, хресченсене сутрĕ. Епĕр çири тумтирпе çеç йулса, пур-çук пурлăха сутса тÿлерĕмĕр.

Епĕ халĕ колхозра, кирпĕч савăтĕнче хурал тăратăп. Пирĕн йашкĕрĕмсем каççерен питех те илемлĕ, савăнăçлă йурăсем йурланине илтетĕп,—манăн кăмăл çĕкленет.

Епĕр çамрăк чухнехи пурнăçпурнăç марччĕ. Йалта çĕр хĕсĕк пирки, ĕç шырама тухса кайрăм. Уралти савăтсенче пултăм. Надеждинск савăтĕнче 7 çул ĕçлерĕм. Унчухне маттур шăм-шаклă çамрăк ачасем пурнăça тарăхса ĕçетчĕç, пыљчăк çинче йăваланатчĕç, хут-купăç каласа хуйхăлă йурăсем йурлатчĕç. Хаљхи çамрăксен савăнăç, пысăк ĕмĕт, вĕсен хуйхă-суйхă çук. Вĕсем кам пулас теççĕ: инженер-и, пилот-и, хăйсем тăрăшса ĕçлесен, пулма пултараççĕ. Вăл Ленин—Сталин аслă партийĕ панă телей. Епĕ Чăваш АССР Верховнăй Советне суйланă чухне Сталинăн çывăх тусĕшĕн—Ворошилăв йулташшăн сасăлатăп.

Манăн виçĕ ывăл. Ĕлĕкхи вăхăтра пулсан, хуçасен савăчĕсем тăрăх ман пекех танккаса çÿремеле пулатчĕ вĕсен. Халĕ вĕсем халăхăн чаплă ĕçĕсенче. Пĕри—йалсовет председателĕ, тепри кирпĕч савăтĕнчи рабочи, виççĕмĕшĕ—Хĕрлĕ Çарта. Епĕр пÿйан та лайăх пурнатпăр. Троцкистсемпе бухаринецсем тата ытти тăшмансем пирĕнтен телейлĕ пурнăça туртса илме хăтланчĕç. Пирĕн коммунистсен партийĕ тата пирĕн халăх вĕсене çĕмĕрсе тăкрĕç. Сталин йулташ пĕтĕм халăха йертсе пырать. Вăл йертсе пынипе малашне те тăшмансене тăпăлтарса, çапса çĕмĕрсе пырăпăр.

У. Й.

Лайăх агитатăрсем

Ишлей районĕнчи ĕççыннисем РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлама пысăк çĕкленÿпе хатĕрленеççĕ.

РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавне хатĕрленес ĕçре пулăшса пыма округри суйлав комиççи членĕсене участкăри суйлав комиççисем çумне çирĕплетнĕ. Халĕ округри суйлав комиççи членĕсем участкăри суйлав комиççисенче час-часах пулаççĕ, вĕсен ĕçне тĕрĕслеççĕ, кăтартусем парса хăвараççĕ.

Пирĕн округра РСФСР тата Чăваш республикин Конституципе суйлав саккунĕсене вĕренме 179 кружок организациленĕ, вăл кружоксенче 4626 çын вĕренеççĕ. Агитатăрсем хăйсен ĕçĕсене йуратса, тăрăшса ĕçлеççĕ. Ишек йалсоветĕнчи учитĕл-агитатăр Иљухин йулташ хăйĕн кружокĕнче 14 зањати иртернĕ. Унăн кружокĕнче 34 çын вĕреннĕ. Кружокра вĕрентнисĕр пуçне вăл кашни ирех кĕтÿ йанă чухне хĕрарăмсемпе суйлав çинчен кĕске калаçусем иртерет, çав калаçусене вăл 327 çынна хутшăнтарнă. Положенипе пĕрлех вăл парти Тĕпкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ колхозсемпе колхозниксем çинчен йышăннă постановленисене каласа парать. Иљухин йулташ пуçарнипе шкул ачисем колхозниксене тĕрлĕрен йурăсем, вăйăсем выљаса панă.

Йамайкассинчи агитатăр Прохăрăвă йулташ иртнĕ суйлав кампанинче те агитатăр пулса ĕçленĕ. Халĕ хăйĕн кружокĕнче 7 зањати туса иртернĕ, кружока 29 çынна йавăçтарнă. Вĕренме çÿреймennисем патне килĕрен кайса калаçусем тăвать. Суйлав йĕрки çинчен вăл килĕрен çÿресе 275 çынна ăнлантарса панă. Хĕрарăмсем пир çапнă çĕрте, каçхине çамрăксем пухăннă çĕрте вăл суйлав çинчен калаçусем туса иртерет. Ăна пурте ăшă кăмăлпа йышăнаççĕ, йуратса итлеççĕ.

Тивĕш йалсоветĕнчи агитатăр Тихăнăв йулташ хăйĕн кружокĕнче 6 хутчен зањати иртернĕ. Унта 22 çынна вĕрентнĕ.

Çакăн пек агитатăрсем районра сахал мар. Вĕсен йышĕ кулленех ÿсет.

Ишек суйлав округ комиççин председателĕ заместителĕ
А. Ф. Филиппăв.

Йефимăвă йулташ суйлавçăсем патĕнче

ÇĔРПӲ. Июнăн 19-мĕшĕнче Туçи йалĕнчи суйлавçăсем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă кандидатпа Александра Йефимăвна Йефимăвă йулташпа тĕл пулчĕç. 380 çын пулнă пысăк митингра Йефимăвă тата Г. Д. Данилăв йулташсем тухса каларĕç.

Колхозник Г. Д. Данилăв йулташ сăмахĕнчен

— Александра Йефимăвнă йулташа епĕ лайăх пĕлетĕп. Вăл колхозлă пурнăçшăн, ĕççыннисен телейлĕ пурнăçĕшĕн, Ленин—Сталин партийĕшĕн йаланах чĕререн тăрăшса ĕçлет. Виççĕмĕш çул ĕнтĕ вăл „Ĕмĕт" колхозра ĕне сăвакан пулса ĕçлет. Ĕçре вăл пултарулă. Вырăнти ĕнесенех аван пăхса сĕт нумай паракан тума пултарчĕ. Ăна Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама тивĕçлĕ. Вăл халăх шанăçне пурнăçлама пултарать.

А. Й. Йефимăвă йулташ сăмахĕнчен

Йулташсем, есĕр мана Туçи суйлав округĕнчен Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратрăр. Ку маншăн çав тери пысăк чыс, савăнăç пулать. Епĕ хамăрăн телейлĕ пурнăçшăн коммунисла партине тата ĕçхалăхĕн çулпуçне Аслă Сталин йулташа тав тăватăп. Ман çине пысăк шанăç хунăшăн сире, йулташсем, тав тăватăп.

Мана Ленин—Сталин партийĕ пăхса çитĕнтерчĕ. Епĕ хам çине хунă шанăçа бољшевикла пурнăçласа пыма пулатăп. Ĕççыннисен пуйан та куљтурăлă пурнăçĕшĕн вăйа хурса ĕçлеме пулатăп.

Сыва пултăр коммунисла парти!

Сыва пултăр пирĕн çулпуçĕ Аслă Сталин!

Малтанхи хут суйлава хутшăнатпăр

(Çамрăк суйлавçăсен çырăвĕ)

Епĕр, 1920 çулта çуралнă çамрăк суйлавçăсем, июнĕн 26-мĕшĕнче малтанхи хут суйлава хутшăнатпăр. Епĕр Октăбĕрти социалисăмла револуци пирĕн атте-аннесене ирĕке кăларнă хыççăн, телейлĕ пурнăç вăхăтĕнче çуралса ÿснĕ. Сталинла Конституци пире пур правасене те пачĕ. Ĕлĕк пирĕн пек чухăн çын ачисемшĕн шкул алăкĕ хупă пулнă. Ун чухнехи шкулсенче пупсемпе пуйан ачисем кăна вĕреннĕ. Пирĕншĕн шкул алăкĕсем уçă. Пирĕн халĕ вĕренме, канма тата ĕçлеме права пур.

Пирĕн çакăн пек телейлĕ пурнăça Ленин—Сталин партийĕ тата совет правителĕстви туса пачĕ. Çакăн пек телейлĕ те савăнăçлă пурнăç туса панăшăн, епĕр, пĕтĕм çамрăксем, Сталин йулташа чĕререн тав тăватпăр. Июнĕн 26-мĕш кунĕнче Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн чĕререн тăрăшса ĕçлекенсемшĕн, коммунистсемпе партире тăманнисен Сталинла блок кандидачĕсемшĕн Калинкина тата Херсонăв йулташсемшĕн сасăлатпăр.

Ив. Илйин.
Пав. Филиппăв.

Ишлей районĕ.

Писĕпри суйлав участкине пулăшмала

ЕЛĔК, июнĕн 21-мĕш (телефонпа). РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали кун нумай йулмарĕ. Хаљ ĕнтĕ кашни суйлав участки суйлав иртерме хатĕр тăмала. Анчах Писĕп йалсоветĕ çапла шутламасть пулас.

Участкăри суйлав комиççийĕ йалсовет çуртĕнче вырнаçнă. Алăкран кĕрсенех суйлавçăсен списки çакăнса тăрать. Тÿрех каламала, спискă çине пăхма та лайăх мар—пурĕ 30 çĕрте тÿрлетсе варалаçа пĕтернĕ. Нумайĕшĕн йачĕсене пăтраштарса çырнă. Сăмахран, Филиппăвă Варварă Йакимăвнă йатне Йакимăвă Варварă Филиппăвнă, тесе çырнă. Хăш çулта çуралнине тата хăш йалта пурăннине нумайĕшĕнне пăтраштарса пĕтернĕ.

Суйлавçăсен списки çумĕнчех тата виç тĕрлĕ спискă çакăнса тăрать, вăл дежурнăйсен списки. Пĕри çинче йалсовет членĕсем, тепри—участкăри суйлав комиççи членĕсем, виççĕмĕшĕ—йалисполнителсем. Анчах ку спискăсене формă йĕнчен çеç туса çакнă. Участкăра нимĕнле дежурнăй тавраш та çук.

Унтах тата „Справкă паракан сĕтел", тесе çырнă вывĕскă пур. Вăл сĕтеле чăлана лартнă. Чăланĕ йаланах питĕрĕнчĕк тăрать. Пыракан çынсем чăлан питĕрĕнчĕк тăнине кура туха-туха кайаççĕ.

Йалсовет председателĕ Анатолйĕв йулташ активпа хутшăнса ĕçлеместь.

Писĕп йалĕнче çуррине йахăн йединоличниксем. Вĕсем хушшинче никам та ĕçлемест. Нумайĕшĕ хăйсен участкинче суйлама палăртнă кандидатсен йачĕсене те пĕлмеççĕ, суйлав хăш кун пулса иртесси çинчен пĕлменнисем те пур.

Çапла вара, Писĕп участкинче пысăк çитменлĕхсем пур. Ку участкăра йапăх ĕçлени çинчен районри организацисем те пĕлеççĕ, анчах нимĕн те тумаççĕ. Писĕпри суйлав участкине халех пулăшмала.

В. Йефремăв.

Халăх шанăçне çухатнăшăн

Килтĕш суйлав участкинчи (Елĕк р.) суйлав комиççи çекретарĕ Ф. Йегорăв (çав йалти тулли мар вăтам шкул директăрĕ) хăй çине хунă пысăк ĕçе кирлĕ пек туса пыман. Вăл участкăри суйлав докуменчĕсене тирпейсĕр усранă, суйлав участкинче дежурнăйра тăнă чухне хăйĕн йулташĕсемпе пĕрле ĕçкĕ тунă.

Суйлав участкинчи йĕркене пăснăшăн Йегорăва суйлав комиççи çекретарĕнчен кăна мар, комиççи членĕнчен те кăларнă. Ун вырăнне йал хушшинче активлă ĕçлекен, хăйне примерлă тытакан учителе—Козлов йулташа суйлав комиççинче ĕçлеме уйарнă.

В. Услн.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕнче

ПСК(б)П Тĕпкомĕн йанварти пленум решенисене пурнăçа кĕртни çинчен

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕ ПСК(б)П Тĕпкомĕн йанварти пленум решенисене пурнăçа кĕртесси мĕнле пыни çинчен решени йышăннă. Обком хăйĕн решенийĕнче райкомсемпе пуçламĕш парторганизацисем коммунистсене партирен кăларнă чухне тунă йăнăшсене тÿрлетес йенепе ПСК(б)П Тĕпкомĕн йанварти пленумĕ хыççăн пысăк ĕçсем туса ирттернине палăртат. Чылай коммунистсене райкомсем, Обком, Парти Контрол̧ Комиççи Партколлегин решенийĕсем тăрăх партинче хăнармала тунă. Партири ĕçсем те лайăхланнă. Коммунистсен политикăлă сыхăлăхĕ хăпарнă, критикăпа самокритикă вăйланнă. Парти организацисем коммунистсем çинчен тăракан ыйтăва тимлĕрех пăхаççĕ т. ыт. те. 1938 çулăн малтанхи 4 уйăхĕ хушшинче партие членне 138 çын, кандидата 194 çын илнĕ.

Çав вăхăтрах тунă йăнăшсене тÿрлетесси чылай парторганизацисенче çаплах вăраххăн пырат, елекçĕсемпе карйериссене, перестраховщиксене хăйулăн тăрă шыв çине кăларни çук, партире хăвармала тунă коммунистсене парти докуменчĕсем вăхăтра памаççĕ, вĕсене парти ĕçне кирле пек хутшăнтармаççĕ.

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕ,—тасаран айăпласа халăх тăшманĕсен йатне пана коммунистсене республикăри тата районсенчи хаçатсем урлă, пухусенче тухса каланипе тÿрре кăларма хушнă. Тÿрĕ коммунистсене йе партире тăманнисене вăралама тăрăшнă карйериссене, перестраховщиксене тăрă шыв çине кăларса ответ тыттармала. Парти организацисем коммунистсене партирен кăлармала туса, йе тепĕр хут кайала партие илмеле туса йышăннă решенисене хаçатсем урлă пичетлесе кăларасси çинчен Парти Тĕпкомĕ кăтартса панисене пурнăçа мĕнле кĕртнине тĕрĕслесе тăма партин йертсе пыракан органĕсен пайне хушнă.

Çавăн пекех Обком райкомсене, Шупашкар хула комитетне апел̧ацисене нумай вăхăта тăсмасăр пăхса тухма, партире хăвармала тунă коммунистсене парти докуменчĕсене вăхăтра пама, вĕсене парти пурнăçне активлăн хутшăнтарма хушнă.

Райкомсемпе хула комитетне коммунистсен партине хирĕçле айăплă ĕçĕсем çинчен райкомсемпе хула комитечĕ йышăннă паллăрах решенисене пур пуçламĕш парторганизацисенче те, çавăн пекех районри парти пухăвĕсенче те сÿтсе йавмала тума хушнă.

Уйрăм парторганизацисенче çаплах бол̧шевикла сыхăлăх вăйсăрри тимсĕрлĕх палăрат. Çаксене шута илсе, Обком пур парторганизацисене те партин политикăлă ĕçне вăйлатма, бол̧шевикла критикăпа самокритикăна сарса пыма, çапла тунипе фашисăмăн троцкисла-бухаринла, буржуалă национализла агенчĕсен йулашкисене тăрă шыв çине кăларса пĕтересе пырассине вăйлатма, тăшмансен сăтăрлă ĕçĕсен йулашкийĕсене социализăм строителствин пур участкисенче те хăвăртрах пĕтерме, хуçалăхлă политикăлă задачăсене хăй вăхăтĕнче пурнăçа кĕртме чĕнет.

Ыйтупа ПСК(б)П Чăваш Обкомĕ Варнарпа Йĕпреç районĕсенчи колхоз председателĕсемпе выл̧ăх-чĕрлĕх стаханăвцисен, зоотехниксен, ветврачсен пĕрлешÿлĕ канашлăвĕ ийунĕн 28-мĕшĕнче Йĕпреç районĕнчи „Молния“ колхозра; Канашпа Шăхасан районĕсен—ийунĕн 29-мĕшĕнче Шăхасан районĕнчи Кирăв йачĕпе тăракан колхозра; Улатăр, Кувакинă, Пăрачкав районĕсен—ийунĕн 30 мĕшĕнче Кувакинăри „Пролетарий“ колхозра; Патăрйелпе Йĕлчĕк районĕсен—ийунĕн 28 мĕшĕнче „Шмидт“ колхозра; Куславккапа Сентĕрвăрри районĕсен—ийунĕн 29-мĕшĕнче Куславкка районĕнчи „Динамо“ колхозра; Турхан, Шăнкăртам, Шăмăршă районĕсен—ийунĕн 30-мĕшĕнче Турхан районĕнчи „Майак“ колхозра; Вăрмарпа Тавай районĕсен—ийунĕн 28 мĕшĕнче; Трак, Çĕрпÿ, Елĕк районĕсен ийунĕн 29-мĕшĕнче Тракра; Шупашкарпа Ишлей районĕсен—ийунĕн 30 мĕшĕнче Шупашкар районĕнчи „Икково“ колхозра; Йетĕрнепе Тутаркас районĕсен—ийунĕн 28-мĕшĕнче Тутаркас районĕнчи „Сеятель“ колхозра; Çĕмĕрлепе Хĕрлĕ Чутай районĕсен—ийунĕн 29 мĕшĕнче Хĕрлĕ Чутай районĕнчи „Сормово“ колхозра.

Çак канашлусенче выл̧ăх-чĕрлĕх ĕçĕнче тăшмансем туса хăварнă сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтермели практикăлă ĕçсем çинчен сÿтсе йавмала.

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕ Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕпе райкомсене канашлусене ирттерме тĕплĕн хатĕрлевме хушнă. Канашлу умĕн ăмăртакан колхозсемпе районсен пĕрпĕрин ĕçĕсене тĕрĕслесе тухмала.

Хутпĕлменлĕхпе хутла сахал пĕлнине пĕтересси çинчен

Парти Тĕпкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă тăрăх, хуптĕлменлĕхпе хутла сахал пĕлнине 1938 çулти йанварĕн 1-мĕшне пĕтĕмпех пĕтермеле. Ку тĕлĕшпе Парти Обкомĕ хутпĕлменлĕхпе хутла сахал пĕлнине пĕтересси çинчен кăтартса панисем нумай пулнă. Апла пулсан та, Çутĕç Халăх Комиссариачĕ те, районсенчи çутĕç пайĕсем те çаплах начар ĕçлеççĕ-ха. Комсомол организацисемпе профсойузсем, çавăн пекех райĕçтăвкомсем те, çак ĕçрен пăрăнса кайнă. Парти райкомĕсем йенчен ĕçе тăтăшах тĕрĕслесе тăни çук.

Ийун̧ уйăхĕ тĕлне республикăпе вĕренĕве хутшăнтарман хут пĕлмен çынсем 3.742 çын пулнă. Уйрăмах ĕçсем Шăнкăртам. Елĕк, Хĕрлĕ Чутай, Сĕнтĕрвăрри, Çĕмĕрле районĕсенче начар тăраççĕ.

Парти Обкомĕ Çутĕç Халăх Комиссариачĕпе райçутĕçпайĕсене ийунĕн 20-мĕшĕ тĕлне хут пĕлмен çынсене пурне те вĕренĕве хутшăнтарма хушнă. Çак ĕçе учителсене, профсойузсене, комсомола пысăккăн хутшăнтармала. Çитĕннисене вĕрентекен пур шкулсенче те вĕрентме тытăнмала. Парти райкомĕсемпе райĕçтăвкомсен çак ĕçе куллен-кун йертсе пымала.

Хутпĕлменлĕхе пĕтерессишĕн райçутĕç пайĕсем, профсойузпа комсомол организацисем, йалсоветсем, колхоз правленисем ответлă. Вĕсен хутпĕлменнисене пурне те вĕренĕве хутшăнтармала, уйрăмах—допризывниксене вĕрентсе кăларасси çине хытă пăхмала.

Хутпĕлменнисен шкулĕнчен вĕренсе тухнисене Обком хутла сахал пĕлекенсен шкулĕнче вĕрентсе кăларма йышăннă.

Çутĕç Халăх Комиссариачĕн çитĕннисене вĕрентес йенĕпе ĕçлекен управлени начал̧никне, Романăв йулташа, хăй ĕçне туса пыма пултарайман пирки вырăнтан кăлармала тунă.

Выл̧ăх-чĕрлĕх ыйтăвĕсем тăрăх ăмăртакан колхозсемпе районсен канашлăвĕсене ирттересси çинчен

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕ ийунĕн 28—30-мĕшĕсем хушшинче выл̧ăх-чĕрлĕх ыйтăвĕсем тăрăх ăмăртакан районсенчи колхоз председателĕсен, выл̧ăх-чĕрлĕх стаханăвцисен, зоотехниксен, ветврачсен пĕрлешÿлĕ канашлăвĕсене ирттерме йышăннă.

Халех хатĕрленмеле

(Шăхасан)

Шăхасан райкомĕ ирттнĕ кĕркунне заочнă вĕрентекен институт йенĕпе парти вĕренĕвне 70 çынна хутшăнтарчĕ. Вĕсенчен чылайĕшĕ лайăх вĕренсе пычĕç. Парти историпе ленинизăм кружокĕсенче вĕреннĕ коммунистсенчен чылайĕшне ответлă ĕçсене лартнă, сочувствуйущисенчен 8 çынна парти кандидатне илнĕ, кандидатсенчен 13 çынна парти членне куçарнă.

Ентрийелĕнче, Вăрман Кипекре тата Сурăмра çула пулсан парти вĕренĕвĕ пĕтсе ларчĕ. Ку ĕçре райком инструктăрĕсем кирлĕ пек тăрăшни пулмарĕ.

Заочнăй институтăн Чăваш уйрăмне хупнă ентĕ. Анчах çака вăл парти вĕренĕвне пĕтерсе лартассине пĕлтермест Шăхасан районĕнче урăхла шухăшлаççĕ. Заочнăй институт уйрăмне хупнă пирки пропагандистсем программăна вĕренсе тухмасăрах кружоксенче занятисем ирттерме пăрахрĕç. Çакă вăл пысăк çитменлĕх.

Н. Михайлăв.

Çтена хаçачĕн ĕçĕсем

Аслă Чакри Карл Маркс йачĕпе тăракан колхоз (Вăрмар р.) çуменче 7 çул хушши ентĕ „Колхоз çулĕпе“ йатлă çтена хаçачĕ тухса тăрат.

ССР Сойузĕн Верховнăй Совет суйлавне ирттернĕ чухне çтена хаçачĕ урлă епĕр пысăк ĕçсем туса ирттертĕмĕр. Кашни номĕртех суйлавçăсене суйлав саккунĕ çинчен каласа паракан статйасем пичетлесе пынă. Хаçата вăл вăхăтра 5—10 кунтах кăларса тăнă.

Ку вăхăтра çтена хаçачĕсем умĕнче калама çук пысăк задачăсем тăраççĕ. Епĕр „Колхоз çулĕпе“ хаçатăн активĕ, РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавне ирттернĕ вăхăтра план тăрăх ĕçлесе пыратпăр. Халĕ епĕр колхозри хаçата 5—10 кунта, бригадăсенчи хаçатсене 3—5 кунта кăларса тăратпăр. Хаçатсене суйлавçăсем ăçта ĕçлеççĕ, çавăнта вуласа паратпăр. Хаçат хăй тавра массăна ытларах йавăçтарсан политикăлă агитаци ĕçне анлăн сарат. Пирĕн хаçат йалкорĕсем—агитатăрсем. Суйлав округĕсенче регистрациленĕ кандидатсем çинчен кашни суйлавçăна каласа параççĕ.

В. Андрийанăв.

Агит-фургон

Суйлавçăсем хушшинче политикăла-кул̧турлă-массăлă ĕçе вăйлатас майпа, ийунĕн 21-мĕшĕнче, ПСК(б)П Чăваш Обкомĕ организациленĕ тепĕр агит-фургон Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Ĕсмĕл йалне тухса кайрĕ. Коллективра—агитатăрсем, чăваш филармонинчен артистсем, скрипачсем, фотограф агит-фургăн çинче çÿрекен радио установкă, патефон пур.

Ш. Н.

Çтена хаçачĕсене йертсе пырас пулат

РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлав кампанийĕ пынă май, ĕççыннисен производствăлă тата политикăлă активлăхĕ ÿснĕçемĕн ÿссе пырат. Çакă ентĕ çтена хаçачĕсем умне пысăк задачăсем кăларса тăратат.

Анчах чылай колхозсенче çтена хаçачĕсем тивĕçлĕ вырăн йышăнайман-ха. Ку ентĕ парти райкомĕсем, районти хаçат редакцийĕсем, партин пуçламĕш организацийĕсем çтена хаçачĕсене йертсе пыманнинчен килет. Ку ыйтупа пирĕн ПСК(б)П Патăрйел райкомĕнче каласма тÿр килчĕ. Унта пире:—Ку ыйтупа епĕр пĕлейместпĕр, районри хаçат редакцине кайса каласса пăхăр, вĕсем ку ыйту тăрăх сире тĕрĕсрех каласа парĕç,—терĕç. Районти хаçат редакцинче ĕçлекенсем те вырăнсенче хаçатсем мĕнле тухса тăни çинчен пĕлмеççĕ.

Редакцинче ĕçлекенсем каланă тăрăх, Нĕркеçри Шмидт йан̧ĕпе тăракан тата Анат Туçари „Çĕлтăр“ колхозсенче çтена хаçачĕсем йĕркелĕ тухса тăраççĕ. Чăннипе илсен, ĕç пĕтĕмпех урăхла. „Çĕлтăр“ колхозра кăçал пĕр номĕр çеç кăларнă. Шмидт йачĕпе тăракан колхозра 17 номĕр кăларнă. Туçари „Хĕрлĕ Туçа“ колхоз çуменче уйăхра икшер номĕр çтена хаçачĕ кăларса тăма йышăннă. Анчах кăçал 3 номĕр çеç кăларнă.

Турхан районĕнчи колхозсенче те çтена хаçачĕсем йĕркелĕ тухса тăмаççĕ. Çапла Шăхачри „Сталинград“ колхозра май уйăхĕнченпе хаçат тухмаст. Тăрмăшри „Хастар“ колхозра редколлеги çук. Комсомол пуçламĕш организацийĕ çтена хаçатне кăларса тăма Васçилий Данилăв йулташа хушнă.

Редколлегисенче колхозри стаханăвĕцсем, колхозниксем хушшинче авторитетлă çынсем ĕçлемелĕ. Анчах халĕ çтена хаçачĕсене нумайĕшне туллимар вăтам йе вăтам шкулсенче вĕренекенсем кăларса тăраççĕ. Вĕсем пулăшни, паллах, пит лайăх, анчах йертсе пырас ĕçе редколлегин тумала.

Колхозри çтена хаçачĕ—колхозниксен хаçачĕ пулса тăрат. Çавăнпа редколлегисен колхозниксен умĕнче отчот туса тăма тивĕçлĕ. Патăрйел районĕнчи колхозсенчи хаçатсен редколлегисем колхозниксен пухăвĕсенче пĕрре те отчот туса паман-ха.

Т. Майорăв.

Çамрăк хĕрарăмсен республикăри II-мĕш сйессĕ

Ийунĕн 21-мĕш, ирхи лару

Сйесăн ирхи ларăвĕнче Никифăрăв йулташ çамрăк хĕрарăмсем хушшинче воспитани ĕçĕ тата хĕрарăмсем çине феодаллă-крепостникле пăхнин йулашкийĕсене пĕтересси çинчен тунă доклада вырăсла каласа пачĕ. Унтан пренисем пуçланчĕç.

Доклад тăрăх тухса калаçма пирвайах ССРС Верховнăй Совечĕн депутачĕ Т. Монçейĕва йулташ сăмах илет. Вăл делегатсене хĕрарăмсен авалхи хисепсĕр, правасăрлă тертлĕ пурнăçĕ çинчен аса илтерсе, совет çамрăкĕсем телейлĕ те савăнăçлă пурнăçпа пурăнни çинчен калат.

—Пирĕн совет хĕрарăмĕсем пур правасемпе те туллин усă кураççĕ. Вĕсен ыранхи пурнăç çинчен кул̧анмали çук. Ачасем вал̧л̧и йаслĕсем, садсем, площадкăсем уçнă, килти ĕçе çăмăллатма прачечнăйсем тата столовăйсем пур. Çаксем хĕрарăмсен ĕçне çăмăллатаççĕ, хĕрарăмсене социализăмлă строителствăна активлăн хутшăнса ĕçлеме пысăк майсем параççĕ,—тет Монçейĕва йулташ. Малала вăл стаханăвла йухăма сарса пырасси çинчен каласа, çамрăк хĕрарăмсене стаханăвла йухăма анлăн хутшăнтарас тĕлĕшпе комсомол организацисем çителĕксĕр ĕçленине палăртат. РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали куна производствăра çĕнĕ çĕнтерÿсем тунипе кĕтсе илме чĕнет.

Унтан Гераçимăва (Тутаркас р.), Айдарăва (Канаш), РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă кандидат—Канашри вакунсем йусакан савăтри стаханăвка Антонăва, ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă кандидат А. Йефимăва йулташсем тухса калаçрĕç.

Пренире тухса калаçакансем вырăнти комсомол организацисем çамрăк хĕрарăмсем хушшинче воспитани ĕçне çителĕксĕр туса пыни çинчен, феодаллă-крепостникле йăласен йулашкийĕсене хирĕç начар кĕрешсе пыни çинчен каларĕç.

Каçхи лару

Каçхи ларура та Никифăрăв йулташ доклачĕ тăрăх прени пычĕ. Пренире Марейĕва (Çĕмĕрле комбинатĕнче ĕçлекен стаханăвка), Макçимăва (Турхан), Чернов (Сывлăха сыхлав Халăх Комиссарĕ), Степанăва (Шупашкар хули), Судайĕва (Улатăр), Александрăва (Трак), Грабăва—ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама палăртнă кандидат тата Смирнăва (Йетĕрне) йулташсем тухса каларĕç.

32.400 ача шкула илмеле

Кăçалхи çĕнĕ вĕренÿ çулĕнче Чăваш республикĕнчи пуçламĕш шкулсенче пĕрремĕш классене 32.400 ача вĕренме илмеле.

„Верный Путь“ колхозра (Нижне-Чирски район, Сталинград облаçĕ).
ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Колхоз ферминчи ĕне сăвакан Л. Т. Маркинă (сулахайран виççĕмĕшĕ)—округри суйлав комиççи членĕ—колхозницăсемпе калаçат.

(Сойузфото).

Çамрăк политрук

(Очĕрк)

Петă комиссар çине пăхса илчĕ. Унăн кăвак куçĕсем комиссарăн çĕмĕрт пек хура куçĕсемпе тĕл пулчĕç.

Комиссар кăшт кулса илчĕ те, Петăна çурăмĕнчен лăпкарĕ.

— Çирĕм çул ентĕ епĕ çар формине хывман. Кавказра, Украинăра, Çĕпĕрте вăрçнă тăшмансемпе. Хĕрлĕ Çарта политрук, комиссар пулса ĕçленĕ. Кремĕлте икĕ хут пулнă. Есĕ, çирĕм виççĕри йĕкĕт, Мăн театрта Сталинпа пĕрле Хĕрлĕ Çар уйавне ирттертĕн. Пайан акă Сталин патне, Кремĕле хăнана кайатпăр. Телейлĕ вăхăтра çуралнă есĕ Катанайĕв йулташ!

Машинă асфал̧тлă урампа шыв йуххи пек çăмăллăн пырат.

Петă уйав хумĕ тумланнă Мускав çине савăнса пăхат. Вăл савăнăçлă çынсене курат те татах хĕпĕртет. Каçхи Мускав ытла та илемлĕ. Мускав каçхине тата капăртарах, хитререх пек курăнат. Кремĕлĕн çăлтăрĕсем Мускава питех те илемлетеççĕ. Çăлтăрсем хăйсен пайăрка çутисемпе Мускава илемлетеççĕ, кашни çынна хĕпĕртеттереççĕ.

Автомобил̧ Хĕрлĕ плошчĕтре самантлăха чарăнчĕ. Хĕрлĕ плошчĕт пайан та вĕçĕ-хĕррисĕр савăнакан халăхпа тулнă. Музыка, йурă сасси инçене кайат. Истори музейĕ умĕнче ташлаççĕ, аллă çуппи инçетренех илтĕнет.

Машинă сасси хапхаран. Кремĕле кĕрсе кайрĕ. Кремĕлĕн аслă дворецĕ умĕнче машинă чарăнчĕ. Петăпа комиссар двореца кĕчĕç. Бархăт сарнă урай çине асăрханса пусат Петă. Вăл залăри Хĕрлĕ Çарăн чыслă командирĕсем çине, бойецсем çине пăхса илет.

. Епĕ те Хĕрлĕ Çарăн шанчăклă политработникĕ, — шутлат вăл.—Епĕ те Кремĕлте, Сталин патĕнче пулма тивĕçлĕ пултăм“.

Петă бригадă комиссарĕпе полковник хушшине, çемçе креслă çине пырса ларат.

Сасартăк залă хумханса, кĕрлесе кайрĕ. Петă ура çине тăчĕ, вăл курчĕ: Сталин тăрат, саламласа аллипе сулат. Ун çумĕнче—йуратнă нарком Ворошилăв, Молотăв, Каганович, Калинин йулташсем. Петă алă çупат, пĕтĕм залă алă çупат. Сталина паттăр Хĕрлĕ Çар саламлат.

Ĕнер Сталин умĕнчен винтовкăсемпе, йуланутпа, танксемпе, артиллери орудийĕсемпе ирттнĕ командирсем, красноармейĕцсем саламлаççĕ Сталина. Мускав сывлăшне хумхатса ирттекен самол̧от хуçисем саламлаççĕ Сталина. Сталин пахчаç пек пăхса ÿстернĕ вĕсене. Сталин тăван атте пек пăхса ÿстернĕ вĕсене.

Сталин хăй пăхса ÿстернĕ паттăр çынсем çине пăхса хĕпĕртет. Вăл хăй те хăйĕн ывăлĕсене савса саламлат.

Петăн Сталин çумнерех ларас килет. Петă Сталина хăйĕн телейĕ çинчен каласа парасшăн. Вăл чăваш халăхĕ Сталина йуратни çинчен, Сталин çинчен савăнăçлă йурăсем йурлани çинчен каласа парасшăн çунат.

Петăн каламали нумай. Вăл Зеленăвка йалне, Кĕçĕн Çавал хĕрринче ларакан йала, аса илет. Çавăнта вăл ÿснĕ, çавăнта вăл малтанхи хут Сталин çинчен илтнĕ. Пĕчĕкренех вăл уйра, выл̧ăхсем патĕнче ĕçленĕ. Колхоз организацилекенсенчен пĕри çамрăк Петă пулнă. Петă Сталин кăтартнă çулпа колхоза тĕреклетнĕ, çирĕплетнĕ. Бригадир, комсорг, йалсовет председателĕ пулса ĕçленĕ. Пур ĕçре те вăл Сталин кăтартнă пек ĕçленĕ.

Петă Сталина сывăхран курма ĕмĕтленнĕ. Мускав парадĕсенче Сталина курсан, вăл хĕпĕртенĕ. Унăн татах çывхарахран курас килнĕ. Пайан вăл ана çывăхран курат. Халĕ калаçас килет, Сталинпа йунашар ларас килет...

* * *

Вăрманта каçхи уçă сывлăшпа сывлама питĕ кăмăллă. Ротă вăрманта пытанса выртат. Разведкă пĕлтернĕ тăрăх, „кăваккисем“ çулпала килеççĕ. Тен çакăнта вĕри çапăçу пулат пулĕ...

Петă бойецсем мĕнле выртнине тĕрĕслерĕ те, „Максим“ çумне выртрĕ. Иккĕмĕш, виççĕмĕш номĕрсем ун çумне выртрĕç. Петă лентăсене тепĕр хут тĕрĕслерĕ.

Вăрманта никам çук пек шăп. „Кăваккисене“ кĕтсе выртакан Петă майăн иккĕмĕш кунхи каçа аса илчĕ. Вăл кун—уншăн нихçан манми кун. Ун çинчен вăл бойецсене каласа панă, çырусенче çырнă.

Сталина аса илсен, унăн йунĕ вĕриленет. Унăн ĕçе лайăхрах, Сталин пек пĕлсе тăвас килет.

— Сасă!.. Сасă!..—хуллен тĕкрĕ Петă иккĕмĕш номĕрне.

„Хĕрлисем“ шăпланса выртаççĕ. Çулпала „кăваккисен“ взвочĕ хуллен пырат.

— Ăçта вĕсен ротти?—шутларĕ вăл. Петă лейтенанта шырарĕ. Лейтенант ун хыçĕнчех шăп выртнă мĕн.

— Ротине те пĕтересчĕ халех, лейтенант йулташ.

— Пулеметчиксене çыраппа йарсан аван пулмала,—терĕ лейтенант.

Лейтенант хăвăрт икĕ пулеметпа тăватă бойеца, задачăна каласа парса, йарат.

„Кăваккисем“ çывхарсах çитрĕç.

— Огон!—терĕ хуллен лейтенант.

Пулемет кĕрлесе кайрĕ. Каçхи тĕттĕме çутă илемлетрĕ.

„Кăваккисем“ ним тума пĕлмесĕр çул çине выртрĕç. Вĕсене пулемет утă çулнă пек пĕтерчĕ.

Пулеметчиксем ротăн йулашки вăйне çĕмĕрсе тăкрĕç.

Петă политрук заместителĕ пулсан та, пур зан̧атисене те çÿрет. Вăлах снайпĕр, парашÿтис. Вăлах бойецсене тĕл пеме те вĕрентет.

Уйрах, вăрмантах вăл бойецсемпе калаçусем ирттерет, хаçатсем вулат.

— Пирĕн политрук нихçан та пиртен уйрăм мар. Вăл пĕрмайах пирĕнпе,—теççĕ бойецсем ун çинчен. Петăна темшĕн политрук, теççĕ вĕсем. Вăл заместител çеç вĕт-ха. Петă вĕсемшĕн çывăх йулташ, аслă йулташ, çавăнпа ăна йуратаççĕ.

Петă—дивизинчи чи лайăх çамрăк политработник. Анчах вăл йуратмаст хăй çинчен каласма. Вăл çынсем çинчен каласа пама йуратат.

— Çынсем пирĕн кунăн мар, сехетĕн ÿсеççĕ,—тет вара вăл йаланах. Çамрăк политрук красноармейĕцсене вĕрентес ĕçе пĕтĕм вăйне хурат. Пирĕн красноармейĕц Борисăв пур. Вăл ССРС историне начар пĕлеччĕ. Групповод „унтан лайăх вĕренесси пулмаст“, тетчĕ. Политрук унпа калаçу ирттерчĕ. Ăна мĕне вĕренме йăвăртараххине туйса илсе, политрук Катанайĕв унпа ĕçлеме пуçларĕ. Кĕнекесем вуласа парат. Мĕн ăнланманнине каласа ăнлантарат. Борисăв интересленме пуçларĕ, халĕ лайăх паллăсем илет.

Шарипăв красноармейĕцпа та уйрăмăн ĕçлесе лайăх вĕренекен турĕ.

Петă РСФСР Верховнăй Совечĕн суйлав кампани çинчен нумай каласа парат, калаçусем ирттерет. Вăл çĕршыв ÿсĕмĕсем çинчен лайăх фактсем илсе кăтартат. Петă Кол̧цовкă çинчен каласа парат. Бойецсем кадрсем ÿснипе интересленеççĕ. Ротăра Коротков çинчен, Храмкин çинчен илтмен çын çук та пулĕ.

Петă хăй те вĕренет, ÿсет. В. И. Ленин сочиненисен томĕсемпе пĕрлех вăл „Дубровский“, „Мертвые души“, „Хлеб“ вулама ĕлкĕрет.

Мăн театрта вăл тăватă хутчен пулнă. Вăл Мускаври театрсенче çирĕм хут ытла та пулнă.

Пурнăç пирĕн çавăн пек. Пеме те, В. И. Ленин сочиненисене вулама та, театра кайма та ĕлкĕрмеле. Кул̧турă ÿсет, çынсем ÿсеççĕ.

Петă тăван колхозĕпе, йулташĕсемпе çыхăну тытат. Ун патне йалтан çырусем йараççĕ.

Петă, колхоз ÿснишĕн, республикă суйлава пысăк çĕнтерÿсемпе кĕтсе илнишĕн, хĕпĕртет.

Петă Катанайĕв чĕри çĕршыв чĕрипе пĕрле савăнса тапат.

Йевгений Йени.

Республикăлă Испанире

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Республика çарĕн бойецĕсем Арагони фронтне кайас умĕн.

(Союзфото).

Шкул ачисен праçникĕ

1937—38 çулти вĕренӳ çулĕ ăнăçлăн вĕçленнĕ йатпа, çулахи каникулсем пуçланас умĕн, ийунĕн 21-мĕшĕнче Шупашкарта шкул ачисен праçникĕ пулса иртрĕ.

„Темп" спорт обществин стадионне шкул ачисем пин çын ытла пуçтарăннă. Оркестр илемлĕ йурă кĕвĕсем шарантарат. Ачасем пурте хĕвел пек ăшшăн та телейлĕн кулса калаçаççĕ, вĕçĕмсĕр савăнаççĕ.

Шкул ачисен праçникне РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама палăртнă кандидат—Шупашкар хула совет председателĕ П. И. Калинкинă йулташ уçат.

Вăл совет гражданĕсен аслă прависем çинчен, совет çамрăкĕсем умĕнче аслăлăх тӳписем патне çитмели çул уçă выртни çинчен каласа, çитес вĕренӳ çулĕнче тата тăрăшарах вĕренме чĕнет.

— Сывă пултăр шкул ачисен чи çывăх тусĕ Сталин йулташ!—тесе вĕçлет хăйĕн сăмахне Калинкинă йулташ.

Митингри ачасем нумайччен тăвăллăн алă çупаççĕ, халăхсен йуратнă çулпуçне Сталин йулташа чысласа „урра" кăшкăраççĕ.

Митинг хыççăн вăйăсем пуçланаççĕ. Площадкăна „Темп" тата „Спартак" обществисен ачасен футбол командисем тухаççĕ. Вăйă питĕ интереслĕ пулчĕ. 2:0 хисеппе спартаковецсем çĕнтерчĕç.

А. Нестĕрăв. Н. Дедушкин.



ССР Союзĕнчи хуласенче

Кисловодскра Йăвăр промышленнăç Халăх Комиссариачĕн çĕнĕ санаторине туса лартнă.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Санаторин пĕр корпусĕ.

(Союзфото).

ИСПАНИРИ ФРОНТСЕНЧЕ

Левантă фронтĕнче, Кастельон районĕнче республиканецсем пăлхавçăсен наступленине чарса лартнă кăна мар, вĕсем тата малала кайса чылай пунктсем тытса илнĕ. Халь вăхăтра çапăçусем Вильйарезьтен çурçĕрелле икĕ километра пулса пыраççĕ.

Теруэль районĕнче республиканецсем вунпилĕк кун хушши ĕнтĕ Камарена патĕнче пăлхавçăсене наступлени тума чарса тăраççĕ.

Фронтăн хĕвеланыç енчи секторĕнче пăлхавçăсем Каса дел Гордона йышăннă. Ытти фронтсенче улшăнусем çук.

* * *

Ийунĕн 20-мĕшĕнче Италипе Германи авиацийĕ Барселона çине бомбăсем пăрахнă.

Бомбăсем пăрахасси пĕр сехете яхăн пынă. Бомбăсем пуринчен ытла порт çывăхне ытларах ӳкнĕ, кунта Англи пăрахучĕ сиенленнĕ.

Çав кунах фашиссен авиацийĕ Валенци çывăхне бомбăсем пăрахнă. Вилнисемпе аманнисем пулман. Фашиссен самолючĕсем порт çывăхнерех анасшăн пулнă, анчах та республиканецсен истребителĕсемпе зенитлă батарейĕсем вĕсене кайала хăваласа янă.

(ТАСС).

Китайри вăрçă

Йапони çарĕсем Хенань провинцинче тата Аньхуей провинцин çурçĕр йенче, çавăн пекех Бейпин—Ханькоу чукунçулĕ çине наступлени тăвасси чаранна. Паллă ĕнтĕ, йапонецсем Хуанхе йуханшывĕ çинчи (Хенань провинци, Çурçĕр Китай) пĕвене татса йанă, вĕсем шыв илтерсе лартса Хенань провинцин çурçĕр лайĕвче Китай çарĕсен вĕсене хирĕç тăрас ирĕкне хуçма хăтланнă. Анчах, йапонецсем кунта хăйсем лартнă капкăна хăйсемех çакланнă. Шыв илсе лартнипе Йапонин механизациленĕ чаçĕсем пит нумай пĕтнĕ. Шыв илсе лартнă пирки йапонецсем çав участкăра малашне наступлени туса пыма чаранна, кунсăр пуçне нумай вырăнсенчĕ вĕсен кайала чакмали çул та пĕтсе ларнă. Йапони çарĕсен малти чаçĕсем пĕр вăхăтра Чженчжоу хулине (Хенань провинцин çурçĕр йенчи хула) пырса кĕнĕскерсем тата Бейпин—Ханькоу чукунçул урлă татса каçнăскерсем, халь вăхăтра кайала чакнă.

Аньхуей провинцинче Китай çарĕсем йапонецсен атакисене паттăрăн сирсе пыраççĕ. Çав провинцинче пысăк çапăçусем пыраççĕ. Чженчжоу çине наступлени туни тата Бейпин—Ханькоу чукунçулĕ тăрăх кăнтăр йеннеле малала кайма хăтланни ăнăçлă пулман пирки йапонецсем халĕ Йанцзы шывĕ патĕнче, нумайах пулмасть хăйсем тытса илнĕ Аньхуей провинцин столици—Аньцин хули районĕнче активлăн вăрçма тытăнна. Кунта Йапонин 95 çар карапĕ тăрать. Шыв тăрăхĕпе Йапони çарĕсем йышлăн тăраççĕ. Анчах йапонецсем Йанцзы шывĕн кăнтăр çыранне десант антарма хăтланни ахалех пулать, мĕншĕн тесен китаецсем вĕсене хирĕç тĕлĕнмеле паттăрлăхпа вăрçаççĕ, вĕсем хире-хирĕç тăрса йун йухтарса çапăçса, йапонецсене çирĕм хут та ытла хăйсен карапĕсем çине кайала тартнă. Китай самолючĕсем Йапони карапĕсем çине ăнăçлăн бомбăсем пăрахаççĕ.

Йапони çарĕ, техника тĕлĕшпе китаецсенчен маларах тăрать пулсан та, Китай çарĕсен паттăрăн тăрса вăрçас ирĕкне хуçма пултараймасть.

Йапонецсен тылĕнче Китай партизанĕсем активлăн вăрçаççĕ. Йапонецсен тылĕнче вăрçакан партизансемпе Китай чаçĕсене хирĕç кĕрешме Йапони командованийĕ унта пысăк вăйсем илсе пырать.

(ТАСС).

Вут-кăвартан сыхланас ĕçсене вăйлатасси

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çак ийунь уйăхĕн 7-мĕш кунĕнче республикăра вут-кăвартан сыхланас ĕççене вăйлатасси тата пушарсемпе кĕрешесси çинчен пăхса тухса, постановлени йышăннă. Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ пур райĕçтăвком председателĕсене, хула совечĕсен председателĕсене, йалсовет председателĕсене, колхоз правленисене, савăтсемпе МТС директăрĕсене вут-кăвартан сыхланмали ĕççем тĕлĕшпе тимсĕр ĕçлесе пырассине тата çав ĕççене хакламаннине çийĕнчех пĕтерме хушнă.

Вут-кăвартан сыхланмали ĕççем мĕнле тăнине тĕрĕслес ĕçе, пушар охранин работникĕсемсĕр пуçне, райĕçтăвком членĕсене, хула совечĕсен членĕсене, савăтсенчи, колхозсенчи тата совхозсенчи депутатсен групписене, советсем çумĕнчи çекци членĕсене тата рабочисемпе колхозниксем хушшинчи активиссене хутшăнтармала.

Вут-кăвартан сыхланмали ĕççем мĕнле тăнине тĕрĕсленин итогĕсене тата вырăнсенче ку тĕлĕшпе тумали ĕççем çинчен савăтсенчи рабочисен пухăвĕсенче, колхозниксен пухăвĕсенче, райĕçтăвкомсен тата хула совечĕсен президиумĕсен ларăвĕсенче сӳтсе-йавмала тата йышăннă решенисемпе ĕççене пурнăçа кĕртсе пынине тĕрĕслес тĕлĕшпе çирĕп контроль тумала, вĕсене пăсакансене хыттăн ответ тыттармала.

Йалсенче пурăнакан пур граждансен те обйазательнă йĕркепе çаксене тумала тăвас: харпăрхăйĕн çурт-йĕрĕсен çывăхĕнче шыв тултарнă чан лартмала, пушар инвентарĕсенчен пĕрне, йалсовечĕ кăтартнă тăрăх: пуртă йе кĕреçе, йе пакур, йе пусма, йе витре, йе шыв тултарса лартнă пичке тата ыт. те, йаланах хатĕр тата йусавлă тытмала, пушар мĕн пулсан пушар сӳнтерме кайнă чухне хăйпе пĕрле çав инвентаре илмеле. Тĕтĕм тухмали шăтăксене тата трупасене пĕрмайах тасатса тăмала, килкартине тата хăй тĕлĕнчи урама таса тытмала.

Райĕçтăвкомсемпе йалсовечĕсене ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йалсенче обйазательнă йĕркепе окладлă страховани тăвасси çинчен йышăннă постановленире кăтартнă льготăсем çинчен, колхозсенче вут-кăвартан сыхланас ĕçе лайăх организациленĕшĕн паракан льготăсем çинчен колхозниксене сарлакан ăнлантарса пама хушнă.

Вут-кăварпа кĕрешес ĕçре ирĕклĕ пушар дружинине татăклă вырăна хурса, вĕсене кашни предприйатинчех, кашни колхозрах, кашни совхозрах, кашни МТС-рах организацилеме тата вĕсене вальљи кирлĕ условисем туса пама хушнă.

Шупашкар, Йетĕрне, Сĕнтĕрвăрри тата Канаш хулисен хула совечĕсен президиумĕсене хуласенчи пушар командисен ĕçне лайăхлатасси çинчен йатарласах пленумра сӳтсе-йавма, вĕсене вальљи лайăх условисем туса пама, вут-кăвартан сыхланма шыв çителĕклĕн хатĕрлес тĕлĕшпе те татăклă ĕççем тума хушнă. Çĕмĕрле хула советне 1939 çултан пуçласа хулара пушар командине организацилес тĕлĕшпе практикăлă ĕççем тума тата 1938 çулхи октябĕрĕн 10-мĕшне хăйĕн сĕнĕвĕсене Халăх Комиссарĕсен Советне тăратма хушнă. Пăрачкав, Вăрнар тата Патăрйел райĕçтăвкомĕсене 1939 çулхи бюджет тăрăх 1939 çулта поçолăксенче тата район центрĕсенче пушар командисем организацилес тата вĕсене тытса тăрас ĕçе вальљи укçа-тенкĕ парас ыйтăва пăхса тухма хушнă.

Шупашкар, Вăрмар тата Шăхасан райĕçтăвкомĕсене урăх ĕçе вальљи йышăннă пушар деповĕсене çийĕнчех пушатса, вĕсене колхозсенчи ирĕклĕ пушар дружинисене пама хушнă тата малашне пушар деповĕсене урăх тĕллевпе йышăнма чарнă.

Йалсоветсемпе колхоз правленисен руководителĕсене уйхирте ӳсекен тырпула, авăн çапнă çĕрте тата складсенче сыхласа усрас тĕлĕшпе халех вут-кăвартан сыхланмали ĕççене организацилеме хушнă.

Улатăр, Кувакинă, Пăрачкав, Çĕмĕрле, Хĕрлĕ Чутай, Турхан, Вăрнар, Шăмăршă, Сĕнтĕрвăрри, Канаш, Йетĕрне, Шупашкар райĕçтăвкомĕсен председателĕсене уйрăмах вăрмансене вут-кăвартан сыхласа усрас ĕç мĕнле тăнине райĕçтăвкомсен президиумĕнче сӳтсе-йавма тата вăрманта пушарсемпе кĕрешнĕ çĕрте вăрмана сыхласа усрас йенĕпе ĕçлекен органсене пулăшассине вăйлатас тĕлĕшпе татăклă ĕççем тума хушнă.

Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссарне тата Сывлăха сыхлав Халăх Комиссарне шкулсемпе пульницасене вут-кăвартан сыхланмали ĕççенчи çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе çийĕнчех кирлĕ ĕççене тума хушнă.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çакна пачах чăтмала мар тесе шутлать: вут тĕртекенсене нумайĕшне çледстви органĕсем тупса палăртмаççĕ. Халăх Комиссарĕсен Совечĕ республика прокурорне вут-кăвар пулни, вут тĕртни тата вут-кăвартан сыхланмали ĕççене пурнăçа кĕртмен пирки çледстви ĕçĕсене вăхăтра тума кирли çинчен астутарать.

Чăваш АСС Республикин Йустици Халăх Комиссариатне вут-кăвар пулнă пирки ĕççене васкавлăн пăхса тухма кирли çинчен тата айăплисене саккун тăрăх çирĕп наказани пама кирли çинчен халăх сучĕсене кăтартусем пама хушнă.



Канаш-Шупашкар чукун çул линине хывса Шупашкара çитнĕ кун. Шупашкар станцийĕ пулас вырăнта. Митинга пынă автомобилсен речĕ.

Р. С. Мастаченко фото-етӳчĕ.

Чукунçул çинче ĕçлекенсен Тĕп çурчĕн ансамблĕ Канашра

КАНАШ. Ийунĕн 16-мĕшĕнче станцăри тата вакунсем йусакан савăтри рабочисемпе инженерлă-техниклă работниксем патне чукунçул çинче ĕçлекенсен Тĕп çурчĕн художествăлă ансамблĕ килчĕ. Ансамбль, вакунсем йусакан савăтра тата станцăра ĕçлекенсем вальљи концертсем пачĕ. Концертсен программинче паллă композитăрсен Чайковскин, Бетховенăн, Шопенăн произведенийĕсем тата халăх йурриеемпе ташшисем пысăк вырăн йышăнаççĕ.

Рабочисем концертсене хавасланса курчĕç, лайăх хакларĕç.

Ластăчкин.

КĔСКЕН

■◆Йăвăрланнă колхозницăсене отпуск. Йалхуçалăх ертелĕн Сталинла уставĕ тăрăх, Кивĕ Йĕкĕтри „Большевик" колхозра (Трак районĕ) йăвăрланнă 6 колхозницăна отпуск панă.

■■ Пĕве. Кармамй йалсоветĕнче (Канаш р.) пысăк пĕве тума тытăннă. Ку пĕве йалта вут-кăварпа кĕрешнĕ çĕрте пысăк вырăн йышăнса тăрать. Унтах пулă ĕрчетме те пулать.

■■ Учителсен велочупăвĕ. Ийунĕн 16-мĕшĕнче Турхан районĕнчи 6 учитĕл Чăваш республикĕн чиксем тăрăх велосипедпа чупса çаврăнма тухнă. Ийунĕн 19-мĕшĕнче велочупу команди Куславккана çитнĕ. Виçĕ кун хушшинче велосипедиссем 450 километр кайнă. Ийунĕн 20-мĕшĕнче вĕсем Сĕнтĕрвăррине тухса кайнă.

Пысăк пĕве тăваççĕ

СĔНТĔРВĂРРИ. Кивĕ Тутайкасси йалĕнче халиччен пысăк пĕве пулман. Кăçал ийунь уйăхĕнче „Кунер" колхоз икĕ тарăн çыран хушшинче пысăк пĕве тума тытăнчĕ. Ку пĕвене тунă çĕре 12.000 кубла метр тăпра кайать. Пĕве çӳлĕшĕ 8 метр пулать, унта 7 метр çӳлĕш шыв тăрать. Ку пĕвене пĕвелесе пĕтерсен, Кивĕ Тутайкасси йал халăхне нумай усă паракан пулать, пĕве урлă лашапа тӳрĕрен каçса çӳреме аслă çул пулать, пĕве шывĕ вут-кăвартан сыхланма, колхозниксен пахчисенчи тымар-çимĕççене шăварма пысăк усă парать.

Колхозниксем ку пĕвене РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйланă кун тĕлне туса пĕтерме тăрăшаççĕ.

Гр. Çмирнов.

Пĕтĕм Союзри йалхуçалăх выставкине хатĕрленеççĕ

Выставкăна çĕнĕ çитĕнӳсемпе кĕтсе илессишĕн

Пирĕн „Çĕнĕ пурнăç" колхоз (Трак р.) Пĕтĕм Союзри йалхуçалăх выставкинче пулма тивĕçлĕ пулни колхозниксене пит савăнтарчĕ. Çавăн хыççăн епĕр татах та вăйлăрах тырпулшăн, йышлă выльăх-чĕрлĕхшĕн çине тăрсах кĕрешме тытăнтăмăр.

Кăçал епĕр хамăр умма гектартан 130 пăтран кайа, мар илес задачă лартрăмăр. Çав задачăна пурнăçа кĕртес ĕçре çуракинче кăçал чылай колхозниксем стахановла ĕçлерĕç. Çав май вăрă çураки ĕçĕсене лайăх пахалăхпа иртертĕмĕр.

Çавăн пекех колхозăн ĕне ферми те çултан çула вăйланса пырать. Малтанхи çулсенче пĕр ĕнерен талăкра 2—3-шер литр сĕт илнĕ пулсан, халь 12-шер литр сăваççĕ.

Колхозниксем халь тырпулсене пăхса ӳстерес ĕçре тăрăшса ĕçлеççĕ. Вăрлăх участкисене çумкурăксенчен тасатнă хыççăн ытти участкăсем çине куçрĕç. Тырпулсене пуçтарса кĕртме пайан куна 3 жнейкă йусаса лартнă, йусамали 2 жнейкă йулнă. Вăрлăх амбарĕсене дезинфекцилесе уйăрса хунă. Ачасем вальљи ийунĕн 17-мĕшĕнчен пуçласа ача площадки организацилерĕмĕр.

Выставкăна епĕр лайăх кĕтсе илессишĕн. Пирĕн çитменлĕхсем те пур-ха. Пысăк çитменлĕх вăл—выльăх витисем начарри. Ку çитменлĕхе кăçал пĕтеретпĕрех; халь йавăç хатĕрлетпĕр. Çитменлĕхсем татах та пур. Анчах выставкă уçăлнă тĕле епĕр çав çитменлĕхсене пĕтĕмпех пĕтерсе выставкăна çитĕнӳсемпе кĕтсе илме хытă тăрăшатпăр.

„Çĕнĕ пурнăç" колхоз председателĕ Н. Илйин.

Пире выставкăра пулма тивĕç пани—тата та лайăхрах ĕçлеме хушать

Войкăв йачĕпе тăракан колхоз (Трак районĕ) иртнĕ çулта гектартан вăтам шутпа 120-шер пăт тĕштырă туса илчĕ. Çавăнпа та пирĕн колхоз Пĕтĕм Союзри йалхуçалăх выставкинче пулма тивĕçлĕ пулчĕ.

Кăçал епĕр иртнĕ çулхи çитĕнӳсемпе лăпланса тăмарăмăр. Иртнĕ çулта 120 пăт илнĕ пулсан, кăçал гектартан 130-шер пăт илессишĕн кĕрешме тытăнтăмăр. Çав шутпа колхоз кӳршĕри „Хĕрлĕ çăлтăр" колхозпа социалисăмла ăмăртăва тухрĕ. Кашни бригадă, кашни колхозник пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлесе пыраççĕ.

1938 çулхи çураки ĕçĕсене лайăх пахалăхпа иртертĕмĕр. Агротехникăлă ĕççене анлăн пурнăçларăмăр. Колхозниксем халь хĕрсех калчасене пăхса ӳстерес ĕçре ĕçлеççĕ. 2-мĕш бригадă вăрлăх участкисене иккĕмĕш хут çумкурăксенчен тасатрĕ.

Калчасем лайăх ӳсеççĕ. Кăçал вăйлă тырпул пуласси куç умĕнчех. Вăйлă тырпула пухса кĕртме хатĕрленес шутпа машинăсене епĕр пурне те йусаса лартрăмăр. Вăл çеç те мар, урапа хатĕрĕсене йĕркелесе çитеретпĕр. Витнĕ итемсене пурне те тастса хунă.

Тырпулсене пуçтарса кĕртнĕ вăхăтра ĕç йĕркеллĕ пулса пытăр тесе, ачасен йаслине организацилетпĕр.

Çавăн пек хатĕрленетпĕр епĕр тырпулсене уйран пуçтарса кĕртес ĕçе. Пĕтĕм Союзри йалхуçалăх выставкине çĕнĕ çитĕнӳсемпе кĕтсе илесшĕн епĕр.

Войкăв йачĕпе тăракан колхоз председателĕ В. СИДĂРĂВ.

Мухтавлă ухатник

КАНАШ. Йаманкассинчи Назар Илйин 70 çула çитет ĕнтĕ. Ватă пулсан та вăл ухатник ĕçне пăрахмасть. Хăйĕн ĕмĕринче Илйин йулташ 97 кашкăр çури тытнă. Кăçал çак мухтавлă ухатник 8 кашкăр çури, хĕлле 70 мулкач, 6 вакша, пĕр тилĕ т. ыт. тытрĕ.

Кашкăрсене пĕтерес тĕлĕшпе лайăх ĕçленĕшĕн Илйин йулташа лăшал тата укçа парса премилерĕç.

Ексқурçине карĕç

Патăрйелĕнчи педучилищăри 3-мĕш класран вĕренсе тухнă çамрăк учителсем тата училищăри преподавателсем—пурĕ 100 çын ытла,—ийунĕн 20-мĕшĕнче Хусана ексқурçине тухса карĕç. Вĕсем Хусанта пĕр ерне ытла пурăнса, музейсене, зоологи сатне, тĕрлĕрен пысăк производствăсене, аслă лăх учрежденисене т. ыт. те курăççĕ.

Г. Рахмуллин.

37 пин тенкĕ тупăш илнĕ

ШĂХАСАН. Иртнĕ çулта Анаткас Кипечри Чăваш Тĕпĕçтăвкомĕ йачĕпе тăракан колхозăн сĕт-çу ферми ĕнесем усраса 37 пин тенкĕ тупăш илчĕ. Государства умĕнчи парăмсене срукра тата ытлашшипех парса татнă. Кăçал колхоз сĕт-çу ферминчен 40 пин тенкĕ тупăш илессишĕн кĕрешет.

Колхозăн кăçал государствăна 4 центнĕр та 48 килограм çу памала. Ку заданине тултарнисĕр пуçне, колхоз 6 центнĕр çу сутса автомашинă илме хатĕрленет.

М. Дмитрийĕв

ХРОНИКĂ

—Чăваш АССР Тĕпĕçтăвкомĕн президиумĕ Борис Самойлович Беленький йулташа Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председател заместителĕ пулса ĕçлеме лартнă.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНĂВ.

Йĕпреçри „Спотара" савăтне

шоферсем кирлĕ

Савăт дирекцийĕ патне пымала, йе Йĕпреç станцинчи вăрман оклатĕнче ыйтса пĕлме пулать. Çавнашкалах Шупашкарта „Спотара" кантурĕнче ыйтса пĕлме пулать,

Гор. Чебоксары, Красноармейская, 5.

2—1

Пайан кино-театрта

Саслă, илемлĕ, пысăк, çĕнĕ фильм „БАКИНЦЫ"

Çеанссем—6 сех. 30 мин. 8 сех. 30 мин. тата 10 с. 30 мин. пуçланаççĕ.

Кассă кăнтăрла 2 сехетрен уçă.

М. ГОРЬКИЙ ЙАЧĔПЕ ТĂРАКАН

Атăл тăрăхĕнчи вăрман ĕç техникине вĕрентекен ИНСТИТУТ

Вăрман ĕç техникине вĕрентекен аслă шкулсене вĕренме кĕме хатĕрлекен икĕ уйăхлăх курса ийунĕн 20-мĕшĕнчен йышăнаççĕ.

17 çулхисенчен пуçласа 35 çулхисем таран, арçынсемпе хĕрарăмсене, вăтам шкултан, рабфакран йе техникумран вĕренсе тухнисене илеççĕ.

Курса кĕме зайавленисене институт дирекцийĕ йачĕпе çак документсемпе пĕрле йамала: малтан вĕренни çинчен справкă, хăш çулта çуралнине кăтартакан справкă тата автобиографи. Паспăрта пĕрле илсе пымала.

Института килнисене вальљи общежити пур тата столовăйĕнче апатланма пултараççĕ.

АДРĔС: г. Йошкар-Ола, Мари АССР, ул. Волкова, 85. телефон № 9 и 59.

Уполномоченный [illegible] №308

Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 500.